1938 ЙАНВАР 9 ВЫРСАРНИКУН
7 (4820)-мĕш №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммунĕ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Йалхуçалăх машинисене хаљ хатĕрлемеле

Социалисăмла йалхуçлăх çултан çул ытларах та ытларах механизациленсе пырать. Иртнĕ йалхуçалăх çулĕнче республикăра пурĕ пин трактор ытла тата 108 комбайн ĕçленĕ. Трактор вăйĕпе ĕçлемели машинăсенчен 586 плуг, 153 сейăлка пулнă. 1938 çулта трактор паркĕ татах та нумайланать, ытти тĕрлĕ машинăсем те нумай килмеле. Социалисăмла йалхуçалăх механизациленĕ çиреп никĕс çине тăчĕ. Пирĕн задача—çав шултра машинăсен вăйĕпе пĕтĕмпех усă курасси.

Тракторсемпе тата ытти машинăсемпе çураки ĕçĕнче тулли усă курма халех хатĕрленмеле. Анчах тракторсене тата ытти машинăсене çуракине хатĕрлес ĕç мĕнле пырать-ха? Пачах çителĕксĕр. Тракторсене йусамали 1937 çулхи тăваттăмĕш квартăл планне тултарайман. Кĕркунне тата хĕлле йусама палăртнă плана йанварĕн 1-мĕшне мĕн пурĕ те 30 процент çеç тултарнă. Пайан куна республикине 500 трактор ытла йусавсăр ларать.

Тракторсене йусас ĕç çавăн пек пит кайа йулса пынишĕн МТС тата МТМ директорĕсемсĕр пуçне Çĕрĕç халăх комиссариачĕн машинă-техникă пайĕ те айăплă. Машинă-техникă пай работникĕсем (Андрейев, Титов) вырăнсенче пулса йертсе пырас вырăнне, кабинетра ларса бÿрократла майпа ĕçлеме йуратаççĕ. Акă, тракторсене йусас ĕç тĕлĕшпе Шупашкар районĕнчи МТС пуринчен кайа йулса пырать. Çулталăк планне мĕн пурĕ те 8 процент çеç тултарнă. Шупашкар районĕнчи МТС çĕнĕ МТС, ăна пулăшмала. Çавах та, МТС директорĕ Шчетинин йулташ пĕлтернĕ тăрăх, кунта иртнĕ çулти çуркуннерен вара машинă-техникă пайĕнчен пĕр çын та пулса курман.

Чылай МТС-сенче тракторсене валљи запаслă пайсем çитмеççĕ. Машинă-техникă пайĕ çав тĕлĕшпе тата машинă-трактор станцисене кирлĕ ытти тĕрлĕ ĕçхатĕрсене кÿрсе килес тĕлĕшпе те вăхăтра нимĕн те туман.

МТС директорĕсем те тракторсене йусас йенĕпе ку таранччен пачах çителĕксĕр ĕçлесе пыça. Маçтерскойсем валљи кирлĕ инструментсене вăхăтра илсе хатĕрлемен. Тракторсене йусас ĕçре ĕçлекен тракториссене пурăнма условисем—хватерсем тата столовăйсем туса паман. Хватер çук пирки Канашри МТМ рабочийĕсем йалан улшăнса тăраççĕ, рабочисене ĕçукçи тÿлес ĕçре те нимĕнле йĕркелĕх çук.

Тракторсене тата ытти машинăсене йусас ĕçре йанвар ĕçе татса паракан уйăх пулса тăрать. Йанвар тата февраљ уйăхĕнче тракторсене йусаса çитерме условисем пурте пур. Бољшевикла йертсе пыни тата ĕçе йĕркелĕ организацилени çеç кирлĕ. Мĕншĕн-ха Куславкка районĕнчи МТС, ыттисенчен нихăш йенчен те уйрăм тăмасть пулин те, çав ĕçе йапăх мар организациленĕ? Квартăл планне ытлашшипех тултарнă? Çав вăхăтрах плугсене те йусаса лартнă. За пасла пайсене вăхăтра хатĕрлесе хунă. Йалхуçалăх снабженин контори çине шанса тăмасăрах трактор плугĕсем валљи автоматсем тупса пама Хусана зайавкă панă. Çулталăк планне МТС 52 процент тултарнă. Çавăн пекех тата Вăрнар, Шăхасан районĕсенчи МТСтанцисем те малта пыраççĕ.

Тракторсене йусас ĕçре кашни станцинчех бољшевикла йĕркелĕ пулмала. Пайантан пуçласа кашни вунакунлăх валљи график-срук сем туса, çав график тăрăх ĕçлесе пырса тракторсене пурне те йусаса çитермелĕ.

Тракторсене йусанипе пĕрлех тата хĕллехи çулпа горÿчи хатĕрлĕсе хурасси те пысăк ĕç шутланать. Çуркуннеччен пурĕ вiçĕ пин тоннăна йахăн горÿчи хатĕрлемелĕ. Анчах, республикăна горÿчи кÿрекен организацисем ку тĕлĕшпе пайан куна вырăнтан та тапранманъха, йанвар уйăхĕшĕн 200 тоннă валљи çеç лимит илме „пултарнă“.

Çавăнпа пĕрлех колхозсен йалхуçалăх машинисене йусаса хатĕрлес ĕç те пит çивĕччĕн тăрать. Лашапа ĕçлемели плугсем республикипе пурĕ 134 пин плуг, сейăлкăсем 3,8 пин пулсан, паллах, вĕсенчен чылайĕшне кăçал йусама кирлĕ. Анчах та ку ĕç çинчен çĕрĕç оргăнĕсем çеç мар, чылай çĕрте колхоз руководителĕсем хăйсем те мансах кайнă. Лаша вăйĕпе ĕçлемели машинăсене йусас ĕç хаљ начар пырать çеç те мар, вăл ĕçе тытăнман та.

Акă, тĕслĕхрен илсен, Йетĕрне районĕнчи „Çĕнĕ вăй“, Çĕрпÿ районĕнчи „КИМ“, Вăрмар районĕнчи „Делегатка“, Елĕк районĕнчи „Социалисăм“ колхозсенче плугсемпе сÿресем ăçта килчĕ унтах, йур айне пулса выртаççĕ. Чылай плугсен запаслă пайĕсене çухатса пĕтернĕ, чылайĕшне йусаттармала.

Колхозсенче машинăсене йусас, вĕсене çуракине хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе çак кунсенчех тăтăклă улшăну пулмала. Кашни колхозра, кашни бригадăра йалхуçалăх машинисене пурне те тĕрĕслесе тухса, тирпейсĕр выртакансене тирпейлесе лартмала, йусавсăррисене йусаса хумала. Плугсене тата сейăлкăсене кирлĕ запаслă пайсем йалхуçалăх снабженин склачĕсенче çителĕклĕ. Йалхуçалăх снабжени конторин плуг кустăрмисене халех кÿрсе килмеле.

Пирĕн кăçал гектартан 100 пăт ран кайа илекен пĕр колхоз та пулмала мар. Вăйлă тырпулшăн иртнĕ çулхинчен те хытăрах кĕрешмеле. Вăйлă тырпул илесси чи малтанах çураки ĕçне, пĕтĕм йалхуçалăх ĕçне пысăк пахалăхпа ирттернинчен килет. Йалхуçалăх ĕçĕн пахалăхĕ йалхуçалăх машинисемпе лайăх та туллин ĕçленинчен килнине никамăн та манмала мар.

Çуракине ăнăçлăн ирттерессине татса параканни вăл—вăрлăх, турăм вăйĕ, машина, стахановла ĕçлени. Çаксене пĕр-пĕринчен уйăрма çук.

★ ○ ★

Мускава, ССР Сойузĕн Аслă Совет çеççине

Мускава, ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕррĕмĕш çеççине Совет Сойузĕн пур кĕтесĕсенчен те Аслă Совет депутачĕсем пырса тăраççĕ.

Таджикистанран пынă Аслă Совет депутачĕсемсĕр пуçне, Мускава Аслă Совет депутачĕсем Ленинградран, Грузин СС Республикĕнчен, Казах СС Республикĕнчен, Чăваш АСС Республикĕнчен тата Совет Сойузĕн ытти республикĕсенчен, крайĕсенчен тата облăçĕсенчен пынă.

Пĕтĕмпе Мускава ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсем 48 çын пынă. (ТАСС).

★ ○ ★

ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсене пĕлсе тăма

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕррĕмĕш çеççине пынă депутатсене регистрацилессине тата пĕтĕм справкăсене парассине ССР Сойуз Тĕпĕçтăвкомĕн çуртĕнче кашни кунах ирпе 10 сехетрен пуçласа каçхине 10 сехетчен туса пыраççĕ. (Хĕрлĕ плошчĕд, ĕлĕк ГУМ çурчĕ пулнă, Центрти подъезд, виççĕмĕш хутлăх. Телефон К—3-43-04).

★ ○ ★

Нумай ачалă амăшсене 1.105 мĕлйун тенкĕ пулăшу панă

Совет Сойузĕнче нумай пин семйесем нумай ачалă пирки государствăран пулăшу илеççĕ. Ача амăшĕшĕн тата ачашăн çакăн пек тăрăшни хĕрарăм мĕн пур правасемпе те арçынпа пĕртан усă куракан совет государствинчĕ кăна пулма пултарать.

ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссариачĕн сведенийĕсем тăрăх, правителствă нумай ачалă амăшĕсене пулăшасси тата аборт тума чарасси çинчен декрет кăларнă кунранпа (1936 çулхи ийунĕн 27-мĕш) 1937 çулхи декабĕрĕн 1-мĕшне Совет Сойузĕнче 1.105 мĕлйун тенкĕ пулăшу панă. Вăл шутран РСФСР-та 850 мĕлйун тенкĕ пулăшу панă.

(ТАСС).

Совет Сойузĕн маршалĕ Василий Константинович Блюхер—ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕ (Инçет Хĕвелтухăçкрайĕнчи Ворошиловски округ тăрăх суйланнă).

Рабочисем, инженерсем, техниксем тракторсене йусама тухса кайнă

ВОРОНЕЖ, йанварĕн 7-мĕш (ТАСС). Калачевскри малта пыракан машинă-тракторлă станци облăçра чи малтан 67 трактор йусаса пĕтернĕ. Россошанск тата Ровенск машинă-тракторлă станцисем те çывăх кунсенчех йусаса пĕтереççĕ.

Воронежри заводсем машинă-тракторлă мастерскойсене пулăшу пама 30 инженерпа техник йанă. Тракторсене хăвăртрах йусама Воронежри предприйатисенчен пысăк квалификацилĕ слесарсене тата токарсене мĕн пурĕ 200 çын йараççĕ. Липецкри предприйатисем 25 квалификацилĕ рабочи уйăрнă.

ХАРЬКОВ, йанварĕн 7-мĕш. (ТАСС). Харьковри 17 пысăк предприйатирен рабочисен тата инженерла-техникла работниксен бригади тракторсене йусама районсене тухса кайнă.

Орджоникидзе йачĕпе тăракан трактор завочĕ Богодуховск, Изйумск тата Бело-Колодезск машинă-тракторлă мастерскойсене виçĕ бригадă йанă. Коминтерн тата Сталин йачĕпе тăракан заводсем те висшер бригадă йанă.

Вырăнсене тухса кайнă промышленнăç стахановецсем çуракине хатĕрленес çĕрте лайăх ĕç тĕслĕхĕсене кăтартма обйазателствă панă.

★ ★ ★

Ленин вилни 14 çул тултарас умĕн

КИЙЕВ, йанварĕн 7-ш. (ТАСС). Украинă столицинчи ĕççыннисем Владимир Илйич Ленин вилни 14 çул тултарнине палла тума хатĕрленеççĕ. Кийев облăçĕнчи Сталин йачĕпе тăракан пропагандăпа агитаци çурчĕн лекторийĕ Ленина асăнса предприйатисенче лекцисем организацилет.

Украинăри „Искусства“ издателстви Ленин кунĕсем тĕлне портретсем, плакатсем, лозунгсем кăларать. Страхов художникăн „Ленин на броневике“ йатлă паллă плакатне, Владимир Илйич Ленинăн паллă портречĕсене—„Ленин читает „Правду“ тата „Ленин и Сталин в Горках“ портретсене тепĕр хут пичетлесе кăлараççĕ.

Владимир Илйичăн револјуцилĕ ĕçĕнчи тĕрлĕрен тапхăрĕсенче ÿкернĕ портречĕсене тунă открыткăсене пысăк тиражпа пичетлеççĕ.

★ ○ ★

Совет Сойузĕ тăрăх

** Куйбышев облăçĕнче 257 колхозра тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеççе пĕтернĕ. Нихăш колхозра та пĕр ĕçкунĕ пуçне тĕштырă 5—6 килограмран кайа тивмест.

** Украинăри кĕр калчисем йур айне пуличчен питĕ лайăх вăй илсе йулнă. Йанварĕн 5-мĕшне уйхирсенче йур 9—20 сантиметр хулăмĕш пулнă. Специалиссем каланă тăрăх, калчасене хĕл каçма метеорологилĕ услови питĕ лайăх.

** Йанварĕн 15—18-мĕшсенче Йарослављ—Мускав хушшинче йĕлтĕрпе тухаççĕ. Унта „Динамо“, „Спартак“, „Локомотив“, „Сталинец“ тата ытти спорт общӗствисен вăйлă йĕлтĕрçисем мĕн пурĕ 68 çын хутшăнаççĕ. Кашни общества 3—5 йĕлтĕрçĕрен командă тăратать. Йĕлтĕрçĕсем тăватă кун хушшинче 235 километр ытла тухаççĕ. Старт Йарослављ хулинче йанварĕн 15-мĕшĕнче ирхине пулать.

(ТАСС).

★ ○ ★

Китайри вăрçă

Вăтам Китайра

ШАНХАЙ, йанварĕн 6-мĕш (ТАСС). Шанхай—Ханчжоу чукунçул тăрăхĕнче Китайри партизан отрйачĕсем вăйлăн çапăçаççĕ. Партизансемпе Йапони çарĕсем хушшинчи çапăçусем Цзйансинпа Сунцзйан хушшинчи (Шанхайран кăнтăрарах) районра пыраççĕ.

ХАНЬКОУ, йанварĕн 7-мĕш. (ТАСС). йанварĕн 5-мĕшĕнче Нанкинран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра çапăçусем çĕнĕрен пуçланнă.

Ханчжоу районĕнчи фронтра улшăнусем çук.

Çурçĕр Китайра

ЛОНДОН, йанварĕн 6-мĕш (ТАСС). „Дейли телеграф энд Морнинг пост“ хаçатăн Шанхайри корреспонденчĕ кăтартса панă тăрăх, Хенањ провинцин çурçĕр йенчи пайĕнче, Желтайа йуханшыв çывăхĕнче, Китайăн пысăк вăйăсĕне тухнă. Кунта пысăк çапăçусем пулассине кĕтеççĕ.

ХАНЬКОУ, йанварĕн 7-мĕш. (ТАСС), Шањдун провинцинче çапăçусем Йанжоу хули таврашĕнче (Цзинанрен 100 километр кăнтăрарах) пыраççĕ.

Фронтăн çав участкине Китайăн çĕнĕ вăйĕсем пынă.

Кăнтăр Китайра

ХАНЬКОУ, йанварĕн 7-мĕш. (ТАСС). Кăнтăртан пĕлтернĕ тăрăх, Гуандун провинцийĕ хĕрринчи тĕрлĕ утравсем çине антарнă Йапони десанчĕсене пурне те кайала чĕнсе илнĕ. Пĕр Хебаодас утравĕ çинче çеç 200 çын йулнă. Çавнашкалах тата Йапони карапĕсене Формозăна кайала илсе пыни çинчен паллă тăваççĕ.

Румынире мĕн пулса иртет

Румынири çĕнĕ правителствă уççăнах фашисла диктатурă правителстви пулса тăрать, вăл правителствăна фашисла национал-христианла партин руководителĕ Гога пуçпулса йертсе пырать.

Национал-христианла парти 1937 çулхи декабĕрĕн 20-мĕшĕнче парламент суйланă чухне пĕтĕмпе 260 пин сасă илнĕ, йе вăл мĕн пур сасăсенчен 9,7 процент пулать. Румынири оппозицилĕ национал-царанисла пысăк парти руководителĕ Маниу Гога правителствине „саккунсăр, конституцилĕ мар“ тесе каланă.

Çĕршыв ăшĕнчи хирĕçÿсемпе клас кĕрешĕвĕ ытла та хытă çивĕчленсе кайнипе, влаç пуçĕнче тăракан пуçлăхсем уççăнах фашисла диктатурă туса хунă.

Румынири йышлă ĕççынни массисен пурнăçĕ татти-сыпписĕр йăчарланса пырать. Хресченсен чухăн пурнăçĕ çитчен çырса пама та май çук. Хуçалăхсенчен 30 процентĕн нимĕнле выљăх та çук. Хуçалăхсенчен 38 процентĕн пĕр ĕне те çук, хуçалăхсенчен 50 процентĕ ытла пĕр сысна та усрамасть. Виçĕ мĕлйун хресчен хуçалăхĕнче 1.500 пин сухапуç шутланать.

Рабочисен ĕçукçи пĕрмайах чакса пырать. 1929 çулхипе танлаштарсан, 1936 çулта хими промышленнăçĕнчи рабочисен ĕçукçи 85,8 процент, тирсăран промышленнăçĕнче—59,4 процент, строителствă промышленнăçĕнче — 66,1 процент чакнă. Ĕçлĕ кун 12—16 сехет тăсăлать.

Рабочисемпе хресченсен тупăшĕнчен калама çук пысăк пайĕ налогсем тÿленĕ çĕре кайса пĕтет. 1935 — 1937 çулсем хушшинче халăхран шăйăрса илекен налогсен хисепĕ 11 мĕлйард лей ÿснĕ (1 лей—2,65 пус укçа).

1933 çулта Румынире „осадăлă положени“ çинчен саккун тухнă, вăл саккун хаљ те вăйрах тăрать-ха. Çав саккун тăрăх, капиталиссемпе помещиксем ĕççыннисене хирĕç хайар террор туса пыраççĕ. Гога йертсе пыракан фашисла правителствă влаçа пыни фашисла террор тата ытларах вăйланассине пĕлтерет.

Гога правителствин çĕршыври социалă никĕсĕ ытла та хĕсĕк. Вăл чиновниксĕ бÿрократин çулти сийĕ çине, çара йертсе пыракансем çине тата придворнăй клика çине çеç тайанса тăрать. Çĕршыв тулашĕнче вăл правителствăна фашисла çĕршывсем çеç — Германипе Итали çеç пулăшаççĕ (национал-христианла партине 1935 çулта Германи фашисăмĕ панă укçапа тунă). Аслă державăсем, пуринчен ытла Франци, Румынире фашисла правителствă тупине питĕ хытă килĕштермесĕр пăхнă.

Гитлер тĕслĕхĕпе ĕçлесе пырса, Гога правителстви мĕн пур демократилĕ организацисене хайаррăн путарса пырас политикăна пурнăçа кĕртсе пырать. Буржуалă либералă хаçатсене те хупаççĕ: Антисемитисăм (йеврейсене хирĕçле) хумĕ ÿссе пырать.

Румыни ничечĕ пĕлтернĕ тăрăх, государствăн хаклă хучĕсем йÿнелеççĕ, çавăн пекех лей хакĕ те чакать. Куллен кирлĕ таварсен хакĕсем темиçе кун хушшинчех 40 процент ÿснĕ. Декабĕрĕн 29-мĕшĕнчен пуçласа йанварĕн 5-мĕшне çитиччен Румынири перекет кассисенчен вкладчиксем 2 мĕлйард лейа йахăн укçа кайала илнĕ. Çаксем вĕсем пурте халăхăн йышлă массисем Гога правителстви çине тăшманла пăхни çинчен калаççĕ.

Оппозицилĕ национал-царанисла партин руководстви, массăсем хытă хĕснипе, çĕршыври мĕн пур демократилĕ вăйсене фашисла правителствăна çĕклесе çапассишĕн кĕрешме пĕрлешме чĕнсе çыру йанă. Рабочи организацисем çак кĕрешÿре национал-царанисла партине пĕтĕмпех пулăшма сăмах панă.

Çапла вара, Гога пуçпулса тăракан фашисла правителствă влаçа хăй аллине йарса илни Румынире класлă хирĕçÿсемпе клас кĕрешĕвĕ калама çук çивĕчленсе кайассине пĕлтерет.

Рабочи класпа хресченсем çак правителствăна хирĕç йăлтах çĕнтеричченех. ĕççыннисен йышлă массисен пулăшăвĕ çине тайанса тăракан чăн-чăн демократилĕ режим туса хуриччен пех кĕрешĕç.

(ТАСС).

★ ○ ★

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри (Арагонри) фронт

Испани оборонă министерстви йанварĕн 6-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, Теруел çывăхĕнчи çапăçусем кашни кун сарăлса вăйланса пыраççĕ. Пăлхавçăсем патне çĕнĕ вăйсем пырса тăма чарăнмаççĕ. Йанварĕн 6-мĕшĕнче питĕ хайар çапăçусем пулса иртнĕ. Йанварĕн 6-мĕшĕнче ирхине артиллерирен пепĕ тата авиаци бомбăсем пăрахнă. хыççăн, пăлхавçăсем Конкудран кăнтăрала Теруел патнелли районра танксем пулăшнипе çине-çинех темиçе атакă та тунă. Республикă çарĕсем вăл атакăсене пурне те сирсе пăрахнă. Кăнтăрла çитнĕ тĕле пăлхавçăсем икĕ танкне çухатса ирĕксĕрех хăйсен позицийĕсем патне кайала чакнă.

Республикă артиллерийĕ ăнăçлă çапăçнипе Сийерра Поломера районĕнче пăлхавçăсен тепĕр икĕ атакине пĕтернĕ. Ку çапăçура пăлхавçăсен пехоти ирĕксĕрех йĕркерен тухса Серро Гордо тата Лас Селадса патнеле чакнă. Меуела до Теруел секторĕнче çапăçусен пуçарулăхĕ республикă çарĕсен аллине куçнă, вĕсем темиçе позици те йышăнса илнĕ.

Республикă авиацийĕ икĕ çапăçу пуçарнă. Малтанхи хутĕнче фашисла самољотсем çапăçуран пăрăнса Сарагосса патнеле тарнă. Иккĕмĕш çапăçура пăлхавçăсем пĕр истребител тата тепĕр бомбардировщик çухатнă.

Тыткăна лекнĕ пăлхавçăсем каланă тăрăх, пăлхавçăсем йулашки кунсенче пысăк çухатусем тунă.

Кăнтăрти фронт

Андалузири фронтра питĕ сивĕ тата йурлă çилтăвăл. Çапăçусем хире-хирĕç персе тăнипе çеç пыраççĕ.

Хаен секторĕнче республикă çарĕсем пăлхавçăсем йышăннă территорисене пырса кĕнĕ.

(ТАСС).

★ ★ ★

Англин 1938 çулхи çар бÿджечĕ

ЛОНДОН, йанварĕн 5-ш. (ТАСС). „Стар“ хаçатăн дипломатилĕ обозреватель сăмахĕсем тăрăх, кăçалхи бÿджетлă çулта Англи хĕçпăшалланас çĕре 340 мĕлйун фунт стерлинг расхутлать. Тинĕс-çар флочĕ валљи 125 мĕлйун фунт стерлинг, сывлăш-çар вăйĕсем валљи 113 мĕлйун фунт стерлинг тата типçĕр çинчи вăйсем валљи 102 мĕлйун фунт стерлинг укçа хывнă. Кунсăр пуçне тата сывлăшран пырса тапăнассинчен хÿтĕленнĕ çĕре (ПВО) пысăк расхут кăларма палăртнă.

—★ ○ ○ ○ ★—

Забастовкă тăвакансем выçма пуçланă

ВАРШАВА, йанварĕн 7 мĕш (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Велновцои (Тури Силези) цинк заводĕнчи 600 рабочи пуçласа йанă забастовкă 11 мĕш кун хушши пырать ĕнтĕ. Забастовкă тăвакансем пĕрмайах фабрикă çурчĕсене йышăнса тăраççĕ. Завод дирекцийĕ рабочисем ыйтнине пурнăçа кĕртме килĕшмен пирки, забастовкă тăвакансем йанварĕн 4-мĕшĕнче апатсăр çимесĕр выçма пуçланă. Выçăпа халсăрланнă 14 рабочине госпитале йанă. Завод территорине полици хупăрласа илнĕ.

○ ○ ○

Германири террор

БЕРЛИН, йанварĕн 7 ш. (ТАСС). Пайан ирхине Берлинра çак çынсене вĕлернĕ: Штрак (Келнран), Отто Демволњф (Миличран, Силези) тата 30 çулхи Герберт Гайевский (Шнейдемÿлран). Вĕсене фашисла суд „государствăна сутнăшăн“ тесе айăпласа асăплантарса вĕлермелле приговор йышăннă пулнă.

— ● ★ ● —

Ван-Зееланд Лондона пынă

ЛОНДОН, йанварĕн 7 ш. (ТАСС). Йанварĕн 6 мĕшĕнче Ван-Зееланд Лондона пынă.

„Ийвинг стандарт“ хаçат çырнă тăрăх, Ван-Зееланд доклачĕ Англи, Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем, Франци, Германи тата Итали хушшинче економикăлă пакт тума сĕнет. Ван-Зееланд пройекчĕ тăрăх, çак пилĕк державă хăйсем пĕр-пĕрине хутшăнса тăнă çĕрте валљутлă чăрмавсемпе суту-илÿри чăрмавсене пăрахăçа кăлармала.

Бригадăсем ĕçе тытăннă

Вăрнарти машинăпа трактор станцийĕн кăçал колхозсем уйхирсенче 48 трактор, 24 сеялка ĕçлемеле. 48 трактортан 19 тракторне капиталнăй ремонт тумалла.

Тракторсемпе йалхуçалăх машинисене плантан МТС-ăн мартăн 1-мĕш тĕлне йусаса пĕтермеле. Халĕ тракторсемпе йалхуçалăх машинисене йусассипе 3 бригада ĕçлет. Тракторсене йусана çĕрте чи лайăх трактористсем кăна ĕçлеççĕ. Çак кунсенче çес 1-мĕш бригада (бригадирĕ Максимов) 8 трактор, 2-мĕш бригада (бригадирĕ Кириллов) 4 трактор, 3-мĕш бригада (бригадирĕ Комаров) 6 трактор йусанă, трактор плугĕ 5, сеялкă 20 йусанă.

Тракторсене йусама запаслă пайсем çитеççĕ, вĕсене малтанах тупса хатĕрленĕ. Тракторсемпе йалхуçалăх машинисене вăхăтра тата лайăх пахалăхпа йусаса пĕтерессипе бригадăсем пĕр-перинпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

М. К. Йаковлев.

Колхоз çуракине хатĕрленет

ВĂРНАР. Çĕнĕ йакакасинчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илчĕ. Ĕçкунĕ пуçне 8,5 килограм тĕш тырă тиврĕ. Дмитрийев колхозник пĕччен 400 ĕçкунĕ тунă, 400 ĕçкунĕшĕн вăл 213 пăт тырă илчĕ.

Халĕ колхоз çуракине хатĕрленет. Çитес çуракинче колхозăн 250 гектар çĕре акса хăвармалла. Пайан куна вăрлăхсене уйăрнă тырăна 100 процентлах суртласа тасатса амбара типĕ вырăна хунă. Йалхуçалăх машинисене йусанă. Уйа 451 лав тислĕк кăларнă, 26 центнер кĕл пухса хатĕрленĕ.

И. Иванов.

Колхозсен йышĕ хутшăнаť

** Пирĕн колхоз кăçал вăйлă тырпул туса илчĕ. Кулътурăлă та пур йенчен те çителеклĕ пурнăç хресченшĕн колхозра çеç пулнине курса, çак кунсенче Шемшешри „Мотор" колхоза (Хĕрлĕ Чутай р.) 8 йедок хутшăнчĕ. Вĕсем халь хусалăх çĕнĕрен кĕчĕç. Вĕсем халь хĕрсех 1938 çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ.

Н. Василйев.

А. А.

** Шетмĕпуç йалсоветне кĕрекен (Ишлей р.) Сарчакри Киров йачĕпе тăракан колхозăн членсен хисепĕ ÿссех пыраť. Пайан куна 3 хуçалăх çеç колхоза кĕмесĕр йулчĕç. Вĕсем те халь зайавленисем çырса пачĕç.

А. Смирнов.

** Ишлей районĕнчи „Красноармейец" колхоза çак кунсенче 3 хуçалăх çĕнĕрен кĕчĕç.

** Елĕк районĕнче „Çĕнĕ çул" колхоза 5 хуçалăх, Хадак йалĕнчи колхоза—5 хуçалăх, Татмăшри Молотов йачĕпе тăракан колхоза—1 хуçалăх члена илме зайавленисем пачĕç.

И. Маркелов.

** Елĕк районĕнчи Какаçри Ворошилов йачĕпе тăракан колхоза 2 хуçалăх тата Сĕмĕрткассинчи Киров йачĕпе тăракан колхоза кĕме 1 хуçалăх зайавлени пачĕç.

И. Кутузов.

Клубпа вулав çурчĕсен ĕçне аван йĕркеленĕ

Йалти политикăлă агитаци ĕçĕнче колхозсенчи клубсемпе вулав çурчĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Ĕçхалăхĕн кулътурлăхĕ куллен кун ÿссе пыраť. Массăн кулътурлăхĕ ÿссе пына май клубсемпе вулав çурчĕсем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Çак задачăна Хĕрлĕ Чутай районĕнчи вулав çурт пуçлăхĕсем ăнланса илнĕ.

Районра 26 вулав çурчĕ, 7 колхоз клубĕ тата хĕрлĕ кĕтессем ĕçлеççĕ. Кăçал районра виçĕ колхозра çĕнĕрен клуб лартнă. Çĕнĕрен уçнă клубсенче колхоз çамрăкĕсем спектаклъсем, вечерсем туса иртереççĕ. Хаçат-журналсем çителеклĕ çырăннă. Районри 11 вулав çурчĕн радио, 2 вулав çурчĕн патефон, 2 вулав çурчĕн хуткупăс, 5 вулав çурчĕн биллиард пур. Шашкă-шахмăт, домино т. ыт. вăйă хатĕрĕсем кашни вулав çурчĕсенчех пур. Колхозниксем вулав çурчĕсене хаçат-журнал вулама, радио итлеме, вăйăсем выльама кăççеренех пуханаççĕ. Вулав çурчĕн ĕçĕсене лайăхлатассипе вулав çурчĕн пуçлăхĕсем пĕр-перинпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах Атнар, Шĕмшеш, Тарабай, Турикасси, Шуљу вулав çурчĕсем аван ĕçлеççĕ. Вулав çурчĕсем хăйсен çулталăкри ĕçĕсем çинчен колхозниксен прхувĕсенче колхозниксене отчотсем туса панă. Пухусенче вулав çурчĕн лайăх ĕçĕсемпе ĕçри çитменлĕхĕсене те палăртаççĕ. Вулав çурчĕсем çумĕнче драмкружоксем те ĕçлеççĕ, стена хаçатсем йĕркеле тухса тăраççĕ.

Райçутĕç пайĕнче ĕçлекен Самарин йулташ районти вулав çурт пуçлăхĕсене пухса кашни уйăхрах 3 хутчен канашлусем туса иртерет. Канашлусенче массă хушшинче мĕнле ĕçлемелине, уйăхри ĕçĕн итогĕсем çинчен сÿтсе-йаваççĕ.

Вулав çурт пуçлăхĕсем „Крестьянская газета" çумĕнче заочна та вĕренеççĕ. Халĕ вырăс чĕлхипе 2-мĕш заданине вĕренеççĕ. Çапла, вулав çурт пуçлăхĕсем хăйсен квалификацине ÿстереççĕ.

Й. Ç.

Драмкружок аван ĕçлет

Кĕçĕн Чуллăри „Çĕнтерÿ" колхозри (Трак р) драмкружок 15 çынтан тăраť. Çак кунсенче çеç драмкружок членĕсем Айзманăн „Тăшман çывăрмасť" тата „Улшăнă самана" пйесăсене лартса пачĕ. Постановкăсенче уйрăмăнах П. Семенов, А. Семенов, Е. Алексейева тата А. Дмитрийева йулташесем аван выляççĕ.

А. Семенов.

Тăшмансене партире вырăн çук

Вăрнарта ăна паллакансем „Иван Василич" тесе чĕннĕ. Пĕхусенче вăл йалнах президиумра ларнă. Час-часах тухса калаçнă. Çынсен çитменлĕхĕсене „критикленĕ", хăй çинчен нихçан та нимĕн те каламан, критикленессине йуратман.

Çĕрпÿ уйес ĕçтăвком председателĕ, Чăвашвăрмантрест управляйушчи, Куславкка комбинат директорĕ, Вăрнарти зооветтехникум директорĕ, Вăрнарти канмали çурт директорĕ, район пуçлăхĕ, йулашкинчен Вăрнар вăрманпромхоз директорĕ пулнă. Акă Йетрухинăн карйерне пуçми. Пур çĕре те, пур участокра та ĕçе йухăнтарнисĕр пуçсăр, унтан нимĕн те кĕтме пулман. Апла пулин те Вăрнарти пуçлăхсем райком секретарĕсем пулнă Н. П. Павловпа Д. Андрейев Йетрухина чи активлă коммунис вырăнне шутланă.

Район секретарĕсен политикла суккăрлăхне пула, Йетрухин вăрманпромхозĕнче хăйĕн сăтăрла ĕçĕн планне пурнăçа кĕртме тытăннă. Хăйĕн çывăх тусĕсене, тăванĕсене, кулак Федотова ĕçлеме илнĕ. Вăрманхоз укçипе хăйне чаплă хватер тунă. Унта укçа тÿлемесĕр пурăннă. Енине вăрманпромхоз утипе тăрантарса усранă. Кунпа çитмест Йетрухина, вăл хăйĕн арăмĕн тăванĕ йачĕпе (Хусанта ĕçлет) Вăрнарта кил вырăнĕ (хăй вальди тесе ăнланмала) илет те çурт лартма тытăнаť. Каллех вĕрманхоз укçипе расхутлаť. Каллех кил вырăнĕнче пĕр йединоличнике çу касиччен ĕçлеттерĕ.

Кам пулнă-ха çав Йетрухин? Вăл патша çарĕнче офицер пулнăскер, 1919 çулта чехсем Хусана илсен, унта икĕ уйăх хушши чехсем патĕнче ĕçленĕ. Ашшĕ-амăшĕсем кулак пулнă, вăрманта суту-илÿ тунă, çĕр тара илсе пурăннă. Çаксене Йетрухин парти документсенче кăтартман.

Декабрĕн 31-мĕшĕнче пулса иртнĕ райком пленумĕ Йетрухина райком бÿро членĕсен, пленум членĕсен те кăларса, вăл партире тăма тивĕçлипе тивĕçлĕ марринне пăхса тухма райком бÿрне хушса хăварнĕ. Паллах, Йетрухин парти ретĕнче тăма тивĕçлĕ мар.

Пленум çавăн пекех „Социализм çулĕпе" хаçат редакторĕ пулса ĕçленĕ Афанасьева хаçатра политикăла йăнăшсем тунăшăн тата 1921 çулхи кулакла восстанипе пулнăшăн ашшĕне лерсе пĕлернипе парти документсенче кăтартманшăн унăн ĕçне пăхма кăларнă.

Пленум тата Г. Т. Шлыканова райком инструкторĕ çĕнчен хăтарса пропагандиссен курсĕнчен чĕнсе илмеле турĕ.

Унăн ашшĕ суту-илÿ туса пурăннăскер, лишенец, Какшăмра „йатлă сып" пулнăскер.

Вăрнар парторганизацийĕн вăрманхозĕнчен Йетрухинăн сăтăрла ĕçĕн йулашкисене тÿрлетмеле, вăрманхозĕнчен халăх тăшманĕсене тымарĕпе кăкласа пăрахмала.

Д. Обофоров.

Çамрăксене кулътурлă кану кирлĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Рабочисен поçолкинчи 24—26 тата 32-мĕш çуртсенче 300 çамрăк ытла пурăнаť. Кунти çамрăксенчен комсомолецсемпе стахановецсем те сахал мар.

Кашни çуртрах хĕрлĕ кĕтессем пур. Иртнĕ çулта хĕрлĕ кĕтессенче кашнинчех биллиард, шашкăшахмăт, домино комплекчĕсем пулнă. Проф ойуз организацийĕ илсе панă библиотекăсемсĕр пуçне тата цех начаљникĕсем те кирлĕ кĕнекесем илсе парса, библиотекăсене пуйанлатрĕç. Хаçат журналсем те пулнă. Пĕр вăхăтра общежитисенче пурнакансем хушшинче тĕрлĕрен кружоксем те ĕçлеме пуçланăччĕ. Çамрăксем кашни каçах пухăнса калаçусем, ташăсем, вăйăсем ирттереччĕç.

Пуçланнă ĕç нумайа пымарĕ. Çуллахи вăхăтра хĕрлĕ кĕтессем хупăнчĕç. Домкомсем ку ĕç çине кирлĕ пек пăхман пирки, йапаласем çĕмĕрĕлсе, çухалса пĕтрĕç. Халĕ акă нихăш хĕрлĕ кĕтесре те пĕр биллиард та шашкă та çук. Кĕнекесене те çухатса пĕтернĕ. Сĕтел çине вигмели хĕрлĕ хăмачсем те çук. Хĕрлĕ кĕтессем йаланах хупă тăраççĕ. Сайра хутра çеç ташăсем туса ирттереççĕ. Кулътмассăлă ĕç пачах сÿнсе ларнă. Стена хаçачĕсем те тухмаççĕ.

Профсойуспа комсомол организацисем хвăтерсенче пурăнакансем хушшинче ĕçлессине манна.

Комсомол комитечĕ çамрăксем хушшинче ĕçлемест. Вăл çамрăксем мĕнле пурăннине пĕлмест. Йулашки 2—3 уйăх хушшинче 3 комитет секретарĕнчен нихăшĕ те комсомолецсем пурăнакан 32-мĕш çурта пырса курман.

Çуртсенчи пайĕн айăпĕпе, час-часах общежитисене шыв тăратаймаççĕ, 32, 7-мĕш çуртсенче хутма та вутă çителĕксĕр. Тепĕр чухне вĕретнĕ шыв пулмасť.

Колхозăн хăйĕн лавка пулаť

КУСЛАВККА. Çÿлти Анчăк-касси йалĕнчи „Коммунист" колхоз членĕсем кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Колхозниксен тĕш тырă та, укçа тенкĕ те çителĕклех. Вĕсем фабрик-заводсенче туса кăларнă куллен кирлĕ таварсене ытларах та ытларах ыйтаççĕ. Анчах колхоз çывăхĕнче лайăх ĕçлекен лавка çук. Çавăнпа та колхозниксем хăйсем лавка лартма йышăнчĕç. Халђхи вăхăтра лавка çуртне тума тытăннă та ĕнтĕ.

К. Симаков.

Подписчиксен йышĕ ÿсет

Çĕрпÿ районĕнчи „Прожектор" колхозра хаçат-журнал çырăнасси питĕ пысăк хавaслăхпа иртсе пыраť.

Хаçат-журнал сарас ĕçре уйрăмăнах агитаторсем пысăк вырăн йышăнчĕç. Вĕсем суйлав умĕн суйлав положенине те, болъшевикла пичетĕн задачисем çинчен те ăнлантарчĕç.

Çапла ĕçленипе „Прожектор" колхозри кашни хуçалăхах пĕрер екземпљартан кайа мар хаçат çырăнса илет, йала пурĕ 190 екземпљара йахăн хаçат-журнал пырса тăраť.

Хаçат-журнал сарасси малалла анлăн сарăлса пыраť.

А. Н.

Трахом институчĕ

1937 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче Шупашкарта трахом институчĕ — Мускаври Офтолмологи Тĕп институтĕн филиалĕ уçăлчĕ.

Çак института уçни Чăваш республикинчи ĕççыннисемшĕн пысăк савăнăç пулса тăраť.

Чăваш халăхĕн ĕмĕрхи инкекĕ—трахом пирĕн тÿпене помещиксемпе капиталиссен пусмăрлă стройĕнчен йулнă. Унчух чăваш ĕçхалăхĕ вырăс буржуазийĕпе чăваш буржуазийĕн икĕ-хутлă пусмăрĕ айĕнче асапă, хĕн-хурлă, кулътурăсăр, выçăла-тутăла пурнăçпа пурăннă. Çакăн пек чухăнлăхра, тăвăр та тасамăсăр условисенче йĕркен чирсем çăмăллăн сарăлса кайма пултарнă,—çапла сарăлнă трахом та.

Совет влаçĕ хăйĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатас политикăна тÿрĕс те çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пычĕ, çĕршыв хуçалăхĕпе кулътурине çитĕнтерес йĕпене улăпла пысăк утăмсем турĕ.

Пирĕн партипе правителствă халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе мĕн тунине çакă та ăнан кăтартса параť. Елĕк, револуциччен, чăваш çĕрĕсенче пĕтĕмпе 20 болница, 17 фельдшер пункчĕ пулнă. Кус лечебницисем уя чух пачах та пулман. Халĕ пирĕн Чăваш республикинче трахома пĕтерес йĕпене темĕн чухлĕ учрежденисем ĕçлеççĕ: Шупашкарта трахоматознăй институт, Канашра 120 сып вырăнлăхĕ, Çĕрпÿре 30 сып вырăнлăх кус лечебницисем, ачасен кус чирĕпе ĕçлекен 10 санатори (вĕсенче 100 ача вырнаçаť), 185 сып вырăнлăх 19 врачебнăй пункт, 385 сып вырăнлăх 16 трахоматори, кунсăр пуçне, йалсенче 685 трахпункт. Çакăнта кăтартнисен шутне ытти чирсемпе ĕçлекен болницăсене кĕртмен, трахома пĕтерес тĕлĕшпе ытти ĕçсене те сахал мар ĕç тăваççĕ.

Трахома хирĕç çакăн пек анлăн ĕçлесе пынипе пула, трахом чирĕ ĕççыннисен хушшинче тек сарăлмаст, вăл çулсерен пĕтсе пыраť. Револуциччен чăвашсем хушшинче трахом 80 процента йахăн, 1928 çул тĕлне 47 процент, 1931 çул тĕлне 34,5 процент пулнă пулсан, халĕ Сывлăх халăх комиссариачĕн сведенийĕсем тăрăх 10 процент шутланаť.

Ĕçĕн резулътачĕсем пысăк, анчах мана йурамасť, 10 процент — вăл пирĕн Чăваш республикинче трахомлисем 100 пин çын патнеле пурнине пĕлтерет. Тата трахом чирĕ кутăн чир пулса тăнипе малмала мар. Епĕр трахом чирĕн çăмăлрах формисене пĕтерсе пытăмар, халĕ трахомăн йавăр формисем йулнă. Апла пулсан, трахома хирĕç кĕрешес ĕçе пирĕн йăлашлатсах вăйлатмала.

Партипе правителства халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе профилактикăлла учрежденисем йĕркелес ĕçе питех те нумай укçа-тенкĕ хываť. Пирĕн профилактикăлла учрежденисене ÿстерсе пымалла.

Сывлăх халăх комиссариачĕ болницăсемпе профилактикăлла учрежденисене администраци тата контрол йĕпене йертсе пыраť, анчах вăл трахома кĕрешекен учрежденисене методикă йенчен тивĕçлипе йертсе пыраймаст. Ку ĕçе Трахом институчĕ туса пымалла та ĕнтĕ.

Трахома пĕтерес йĕпене ĕçлекен институтăн задачисем пысăк. Трахоматозниксен çĕнĕрен кадрсене хатĕрлесе кăлармала, врачсем, фельдшерсем, акушеркăсем, трахработниксем аслăлăхне хăпартса пырас тĕлĕшпе куллен ĕçлемелле, трахоман сывватас ĕçе ниминститутра анлăн, кăтартулăн туса пымалла, пирĕн лечебнăй учрежденисене пулăшса тăмалла, оперативлă пулăшса, методикă йенчен йертсе пымалла. Институт ку ĕçе пирĕн специалиссен вирса, консултацисем урлă туса пымалла. Санатарипе профилактикăлла ĕçне анлăн туса пымалла; массăллă литература, брошурăсемпе плакатсем, лозунгсем кăларса тăмалла. Чăваш республикинчи медицинăлла работниксене пухса методикăлла конференцийĕсем туса иртермелле. Çак трахома пĕтерес йĕпене ĕçлекен институтăн тĕп задачисем.

Партипе правителства, çавăн пекех пĕтĕм совет общественноçĕ института пулăшаççĕ. Институтăн коллективĕ хăйне шанса панине тÿрре кăларас тесе, чăваш ĕççыннисен ĕмĕрхи инкекне — трахома пĕтерессишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлемеле.

Чăвашсен трахома пĕтерес йĕпене ĕçлекен институчĕн директорĕ

К. Забугин.

Шкулти библиотекă аван ĕçлет

ЕЛĔК. Йуçкассинчи вĕтам шкулта иртнĕ çулсенче шкул библиотеки йапăх ĕçлечĕ. Библиотекăри ĕç кăçал чылайах аванланчĕ. Иртнĕ çулта библиотекăра мĕн пурĕ те кĕнекесем 2 пин тенкĕлĕх çеç пулнă, кăçал кĕнекесен шучĕ 5 пине çитрĕ.

Çак кунсенче çеç шкул директорĕ Молостов йулташ çĕнĕрен тата 200 кĕнеке илсе пачĕ.

Ив. Маркелов.

Некрасов произведенисене йуратса вулатăп

Вырăссен аслă поечĕ Некрасов вилнĕренпе 60 çул иртрĕ. Ку кĕске вăхăт мар. Çапах та Некрасова епĕр, совет çамрăкĕсем, тата пĕтĕм халăх нихçан та манас çук. Халăх Некрасова йуратни çулран-çул ÿссе пыраť. Мĕншĕн тесен, вăл патша Российĕн йăвăр условинче пурăнакан ĕçхалăхĕн пурнăçне тĕрĕс сăнласа хăварнă. Ĕçхалăхне кĕрешĕве тухма чĕннĕ. Чи пирвайхи хут вăл вырăс литературинче хулара тата йалта пурăнакан чухăнсене тĕп герой тунă, пĕтĕм чăнлăха, тĕрĕслĕхе уçса панă.

Епĕ Некрасовăн сăввисене, поемисене 1927 çулта вулама пуçларăм. Малтан „Мороз-красный нос" тата ытти сăввисене вуласан, вĕсем мана кăмăла карĕç. Мана Некрасовăн биографийĕ питĕ тĕлĕнтерчĕ. Вăл помещик семйинче çуралнă пулсан та, вĕсен интересĕсемшĕн тăрăшман. Ашшĕ килĕнче хĕн-хур айĕнче асап курса пурăнакан хресченсен хурлăхлă сассине итлесе ÿснĕскер, хресченсене ирĕке кăларассишĕн кĕрешме пуçланă. Çамрăклах ашшĕнчен уйăрлнă. Ашшĕ пулăшманнине хăй те хурлăхлă пурнăçпа пурăнма пуçланă.

Çак çулсенче „Размышление у парадного подъезда", „Кому на Руси жить хорошо" тата ытти произведенисене те вуларăм. Вăл произведенисенче иртнĕ ĕмĕрĕн 50—70-мĕш çулсенчи хресченсен йăвăр пурнăçне кăтартса панă. Пусмăрлакансене халăх чĕререн курайманнине, халăх кĕрешÿ урлă çеç ирĕке тухма пултарассине кăтартнă. Хресченсене пусмăрлакан харам пырсене питленĕ.

Некрасов произведенийĕсем пире ĕлĕкхи пурнăçа пĕлме пулăшаççĕ. Вĕсене вуланă çемĕн вулас килет.

В. Вишневский.

Совет учителĕсен чыслă ĕçĕ

Шкул ачисен хĕллехи каникулĕсем пĕтеççĕ. Тепĕр виçĕ кунтан пирĕн ачасем, çĕнĕ вăй пухса, класене пыраççĕ. Шкулти пурăнăç çĕнĕрен вĕреме тытанаť.

Ĕçлеме тытăннă майĕпе, паллах, учителсен кайала çаврăнса пăхмалла пулаť, пĕрĕмĕш çурçуллăхра мĕн туса çитернине тавçарса пăхса, малала мĕнле ĕçлемели çинчен шухăшламала пулаť.

Пирĕн государствăн халăха çутта кăларас ĕç çине пысăккан çаврăнса пăхаť. Йут çĕршывсенче нихăшĕнче те ачасене вĕрентес ĕç валљи пирĕн пек нумай укçа-тенкĕ такакламаççĕ. Тĕнчери нихăш çĕршывра та ачасене пăхса ÿстерес тата вĕрентес ыйтушăн пирти пек вирлĕн тăрăшмаççĕ. Ку ĕнтĕ чăннипех те пĕтĕм государствăн пысăкран та пысăк ĕçĕ, ăна сарса тата çирĕплетсе пырассишĕн пĕтĕм совет халăхĕ чĕререн интересленет.

Çамрăк ăру кулътурлă, нумай пĕлекен, çирĕп, хăйулă, коммунисăм ĕçĕшĕн нимрен шикленмесĕр кĕрешме пултаракан пулмала. Совет учителĕсен умĕнче питĕ паха та аслă задачă —хăйсен ашшĕсем çÿле çĕклене çĕнтерÿ йалавне йалачах тытса пыракан çамрăксене пăхса ÿстерессипе тăраť.

Вĕренÿ çулĕн иртнĕ çурçуллăхĕ пирĕн шкулсенче РСФСР Çутĕç халăх комиссариачĕн тата хăшпĕр ытти сойузлă республикăсен Çутĕç халăх комиссариачĕсен руководствине хĕсĕнсе кĕнĕ тăшмансем туса пынă сăтăрла ĕçĕн йулашкисене пĕтерейменни çинчен кăтартаť. Ачасем çĕр процентпех лайăх вĕренсе пымала туса ĕçлекен преподавателсемлĕ шкулсем пирĕн сахал-ха халĕ. Çав вăхăтрах пирĕн йапăх ĕçлекен шкулсем нумай, вĕсенче вĕренекенсенчен виççĕмĕш пайĕ вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймасť Уйрăмăнах вырăс чĕлхине вĕренессине, питĕ те кирлĕ предметпа, ĕç начар тăраť. Шкула вĕренсе пĕтерекенсем пур йенчен те кулътурлă, кирек йепле пĕлÿлĕ те пулма çаврса илме пултаракан çынсем пулмала. Анчах çавăн пек пулас пулсан, чи малтан тăван чĕлхене лайăх пĕлни кирлĕ.

Буржуалă националиссем нацилĕ совет республикăсемпе облаççен çамрăкĕсене вырăс кулътуринчен уйăрса йарас тесе пур майсемпе те тăрăшнă. Çав тĕллевпе ĕнтĕ вĕсем шкулсенче вырăс чĕлхине вĕрентессине пачах пĕтерсе лартма тăрăшнă. Çав майпа вĕсем шкул программисене тунă чухне вырăс чĕлхиве валљи сахал вăхăт уйăрнă, преподавателсем туса педагогикăлă ĕçе илсе пыма пултарайман çынсене йанă. Çапла, сăмахран, Таджик ССР-че вырăс чĕлхине вĕрентекенсем хушшинче çырма-вулама лайăххăн пĕлмен преподавателсем тупăннă, вĕсем ачасене асаплантарнă кăна. Таджик ССР-чи чылай шкулсенче вырăс чĕлхине вĕрентекен учителсем пачах пулман.

Питĕ те илĕртекен предмета, ССРС историне, вĕрентес тĕлĕшпе ĕç халĕ те çителĕклĕ пулса пымасť-ха. Час часах преподавателсем хăйсем историне пĕлмеççĕ, çавăнпа та ĕнтĕ хăйсен аудиторине интереслентерме те пултараймаççĕ. Сталинла Тĕп Комитет пирĕн шкул ССРС историн чăннипех те наукăлă, чăннипех те марксисла учебникне илтĕр тесе тăрăшрĕ. Çавăн пек учебнике, ачасене пирĕн тăван çĕршыв историне тĕрĕс те илĕртмеле вĕрентме май пар кан учебнике, паллă ĕнтĕ, Шестаков профессор редакциленипе кăларнă. Апла пулсан, ĕç педагогра кăна!

Асрах тытмала, вĕрентнин ÿĕмлĕхĕ йаланах учителрен, унăн мегачĕпе унăн пултарулăхĕнчен килет. Вĕренекенсем начар вĕреннин тĕп сăлтавĕ—урок пахалăхĕ çителĕксĕрри пулни уççăнах паларса тăраť. Пахалăх йенчен çителĕксĕр, салхулă, типĕ урок вĕренекенсем предметпа интересленме пăрахасси патне илсе пыраť. Начар вĕрентекен учителĕн кăна ачасем заљагире аташаççĕ, урăх ĕççемпе аппаланса лараççĕ. Ачасем начар вĕренсе пыни—учител урока кирлĕ пек иртерме пултарайманнине питĕ те тĕрĕссĕн кăтартса параť.

Вĕренекене предметпа интереслентерме пулта айман пулсан, вăл шкулра кăна мар начар вĕр нет, тата килте те ĕçлемест, уроксене те хатĕрленмест.

Парти Тĕп Комитечĕ 1936 çулти ийулĕн 4-мĕшĕнче вĕрентес ĕçе педологи пăснисем çинчен йышăннă хăйĕн постановленийĕпе педагогикăпа педагогсене хăйсен прависене пĕтĕмĕшпех тепĕр хут тавăрса пачĕ. Учителе творчествăла ÿсме чăрмантаракан, ачасене асаплантаракан педологиле вилĕ схемăсене пăрахăçа кăларнă. Учител хăйĕн педагогла пултарулăхне пĕтĕм анлăшĕпе сарса йама пысăк майсем туйанчĕ.

Партипе правителствăн шкул çинчен йышăннă директивĕсенче шкул ĕçĕнче ÿсĕмсем тума май паракан пур условисене те туса панă. Кашни вĕренекен çине уйрăммăн, тимлĕн пăхса ĕçлемеле, уроксем иртерме малтанах хатĕрленсе çитмеле, вĕрентес ĕçе чĕррĕн те интереслăн организацилемеле, предмета системăлă та йĕркелĕн каласа пымала, ачасене кĕнекесемпе тата учебниксемпе хăйсем тĕллĕн ĕçлеме, кабинетра тата лабораторинче хăйсем тĕллĕн ĕçлеме йаланах вĕрентсе пымала. Вĕренекенри пĕлÿ илес, наукăна вĕренес чĕре интереса çĕклеймен пулсан, учител хăйĕн задачине пурнăçланă тесе шутлама пултараймасť.

Кунпа пĕрлех учителĕн ачасен ĕçне йаланах шута илсе пымала, йулса пыма тытăнакансене вăхăтра пулăшмала, унăн хăйĕн çирĕп дисциплинăна пăхăнмала, çавна тума ачасене те хушмала.

Чи лайăх совет учителĕсем хăйсен питĕ те паха практикипе çакна кăтартрĕç: именнă çÿлте асăннă условисене пурнăçа кĕртни ÿсĕмсен никĕсĕ пулса тăраť.

Ачасем вĕренÿре ĕлкĕрсе пыманнипе кĕрешесси—çакă ĕнтĕ халĕ пĕтĕм совет учителĕсен тата халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен органсен питĕ те кирлĕ задачи. Вĕренÿре ĕлкĕрсе пыманнине пĕтермесĕр малала кайма çук!

Вĕренÿре ĕлкĕрсе пыманнипе ăнăçлăн кĕрешес тесен, шкулти политикла-вĕрентÿлĕ ĕçе татăклăнах лайăхлатмала.

Ленин каланă:

„...пирĕн шкулăн çамрăксене пĕлÿлĕхĕн никĕсне памала, хăйсем коммунисăмла ăс-хакăл туса хатĕрлеме пултарма шухăш памала, вĕсенчен нумай пĕлекен çынсем тумала. Çынсем шкулра вĕреннĕ вăхăт хушшинче, шкулăн вĕсенчен експлоататорсене пĕтерсе ирĕке тухас кĕрешÿри участниксем тумала".

Вĕренекенсен тăнлавăвне коммунисăмла мировоззрени—етемлĕхĕн чи малта тăракан мировоззренине вĕрентсе кĕртме учителе май паман предмет çук. Аслă Совет суйлавĕсем пирĕн ачасем çĕршывăн политикла пурнăçне мĕнле чĕррĕ те вирлĕ интереспа сăнаса пынине лайăх кăтартрĕç. Нумай çынлă пухусем, пирĕн тăван çĕршывăн йатлă çынĕсемпе ĕççыннисем чаплăн тĕл пулнисем ачасен патриотла туйăмне çирĕплетсе, питех те кирлĕ ĕççем çинчен шухăшлама кăтартса хăварчĕç, вĕсене политикла пурнăçа йавăçтарчĕç. Пĕчĕк ача, ун ăшĕнче пĕчĕк патриотăн хĕрÿлĕ чĕри тапса тăраť пулсан, йаланах лайăх вĕренсе пыраť, мĕншĕн тесен лайăх вĕренни тăван çĕршывшăн кирлине вăл пĕлсе тăраť.

Пĕтĕм совет общественноçĕн учителе пулăшас ĕçе хутшăнса, унпа пĕрле шкулри политикла-вĕрентÿлĕ ĕçе лайăхлатмала. Чи малтанах учител комсомол организацисем тата вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем пулăшассиçине шанма пултараť. Анчах тÿрех каламала, комсомол организацисем халиччен шкул валљи сахал ĕç тунă-ха. Шкулти пионер отрйачĕсем чылай чухне пачах ĕçлемеççĕ. Хăшпĕр чухне тата пионер отрйачĕн ĕçĕ çамрăк натуралиссен йе авиомоделиссен кружокĕн ĕçĕсене туса пынинче кăна тăраť. Çĕршер пионер отрйачĕсем вожатăйсăр пурăнаççĕ.

Комсомолăн Тĕп комитечĕ шкулсенчи пионерсен ĕçĕ мĕнле тăнишĕн пĕтĕм ответлăха тытаť.

Молотов йулташ 1937 çулти нойаберĕн 6-мĕшĕнче Пысăк театрти чаплă ларура тунă докладра çапла каларĕ:

„Пирĕн çĕршывра социалисăм политикăла облаçре 1917 çулти октабĕр кунĕсенчех ĕнтĕ пĕтĕмĕшпех çĕнтерне. Çĕршыв економикинче социалисăм пуçпех çĕнтерни çинчен хресчен массисем колхоз çулĕ çине тăнăранпа, урăхла каласан, 7—8 çултанпа, калама пултаратпăр епĕр. Социалисăм кулътурă облаçĕнче пуçпех çĕнтерни çинчен калама иртерех-ха. Кунпа çак факт çыхăнса тăраť: çынсен ăстăнĕнчи капиталисăм йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе пирĕн çав тери нумай ĕçлемеле пулаť. Социалисăмлă кулътурăна анлăн çĕклентерсе пынипе кăна вĕсене ăнăçлăн пĕтерме пулаť".

Ленин—Сталин партийĕ тата совет правителстви учителĕн, социалисăмла кулътурăна саракане, социалисăм çĕршывĕн çамрăк ăруне вĕрентсе ÿстерекенĕн хисеплĕ ĕçне çăмăллатас тĕлĕшпе мĕн тумалине пурне те тăваççĕ. Сталинла Тĕп Комитетпа совет правителстви шкулшăн тăрăшни çине совет учителĕсен социалисăмла кулътурă строителствишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлесе, халăха çутта кăларас хисеплĕ ĕçре пĕтĕм вăйа хурса ĕçлесе ответлемеле.

(„Правда" умстатйинчен).

8

Вăрман хатĕрлевĕ

Квартăл планне вăхăтра тултарассишĕн

Йĕпреç вăрманпромхоз директорĕ Солдатов вăрманпромхоз директорĕсемпе райĕçтăвком председателĕсем январĕн 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ канашлувĕнче вăрманпромхоз 1937 çулти плана тултарманнине тĕрĕс, пурнăçра пулман, пулас та çук сăлтавсемпе витме тăрашрĕ.

Шăмăршă вăрманпромхоз директорĕ Матвеев та тата ытти хăшпĕр работниксем те çав çул çинех тăнă. Пĕр рабочи те, инженер та, техник та, колхозник те Солдатовпа Матвейевăн çĕрĕк шухăшĕсемпе килĕшме пултараймаст.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Вăрман хатĕрлекен организацисемпе колхозсем хушшинчи çыхăнусем" çинчен йышăннă постановленийĕ тăрăх, колхозниксем вăрманта ĕçленĕ ĕçукçине колхоза тÿлес, çавăн пекех тата колхозниксене вăрманта ĕçленĕшĕн колхозран ĕçкунĕсем парас йĕркене пăрахăçа кăларнă. Ун вырăнне вăрман хатĕрлекен организацисем кашни уйрăм колхозникĕ ĕçлев килĕшĕвĕ тăрăх ĕçукçи тÿлемелле тунă. Лашасемпе ĕçленĕшĕн, колхозсемпе килĕшнĕ тăрăх, ĕçукçин сахал пайне колхоза тÿлемелле. Ку ĕнтĕ партипе правительства массăсен ÿссе пыракан пурнăçпа йăла тата культурă ыйтăвĕсене вырнаçулă та вăхăтра пурнăçласа пыма условисем туса пани пулать.

Колхозсемпе хуçалăх договорĕсем тунисĕр пуçне кашни уйрăм колхозникпе мĕнле çу, мĕн чухлĕ тата хăш вырăнта ĕçлемеллипе, çавăн пекех ĕçшĕн тÿлемелли виçепе, йĕркепе, условисене кăтартса ĕçлев договорĕсем туни колхознике вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлеме лайăх условисем туса парать. Вăрмана çуран ĕçлеме кайакан колхозник хăй ĕçлесе илнипе пĕтĕмпех илме тивĕçлĕ. Лашапа ĕçлекен колхозник те ĕçукçин сахал пайне çеç колхоз кассине парать.

Мĕн чухлĕ лайăхрах ĕçлетĕн, çавăн чухлĕ ытларах ĕçукçи илетĕн. Паллах, тăрăшса ĕçлекен çын вăрманта ĕçлесе колхозра ĕçкунĕ тунипе пĕрттан илме пултарать.

Шупашкар вăрманпромхозĕнче ĕçлекен Тутаркас районĕнчен пынă Блохинпа Михайлов колхозниксем уйăхне 200-шер тенкĕ ĕçлесе илеççĕ. Çав районти Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕ И. В. Михайлов лашапа ĕçлесе 400 тенкĕ ытла ÿкерет. „Красная звезда" колхоз членĕ Йаковлев та Михайловран юлмаст. Нормăна ытлашшипех тултаракан Черепанов тата Осипин йулташсем 700 тенкĕ ытла ĕçлесе илеççĕ. Ку фактсем вăрманта ĕçлеме лайăх условисем пуррине аванах кăтартса пачĕç.

Ĕçе тĕрĕс организациленĕ, колхозсемпе тăччăн çыхăнса ĕçленĕ, ĕçлеме, кайма условисем туса панă çĕрте вăрманпромхозсем нимĕнле йăвăрлăхсемсĕрех вăрман хатĕрлев планне тултарса пыраççĕ. Кун çинчен Шупашкар вăрманпромхозĕн ĕçĕсем аван кăтартса параççĕ. Шупашкар вăрманпромхозĕ 1937 çулхи плана ытлашшипех тултарнă. Халĕ çĕвăйĕ вăрманта ĕçлеме кирлĕ таран пур. Тутаркас, Ишлей, Йетĕрне районĕсенчи колхозсем вăрмана пысăк хаваслăхпа ĕçлеме тухаççĕ. Тутаркас районĕнчен суранисем 50 çын, лашаллисем 60 çын пымала пулсан, суранисем 72 çын, лашаллисем 103 çын ĕçлеççĕ. Ку ĕнтĕ колхозниксем ĕçлеме пымаççĕ тенĕ шухăшсене тĕпĕ-йĕрĕпех çапса салатать.

Патăрйел тата ытти хăшпĕр районсенче ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановленине тĕрĕс ăнланман пирки йăлăш çул çине тăнă колхозсем те пур. Постановлени тухнă хыççăн, хăшпĕр колхозсенче 1936 çулта вăрманта ĕçленĕшĕн панă ĕçкунĕсене 1937 çулхи ĕçкунĕсенчен тытса йулма тытăçнă. Кунашкал туни тĕрĕс мар. Постановлени тухиччен панă ĕçкунĕсем колхозниксем аллинчех пулмала.

Вăрман хатĕрлев планне тултарни халăх хуçалăх планне ăнăçлăн тултарса пыма условисем туса парать. Епĕр вăрман хатĕрлев планне вăхăтра пурнăçа кĕртсе пырсан хамăр республикăри предприятисем вальĕн ăнăçлăн ĕçлеме условисем туса паратпăр.

Вăрман хатĕрлев планне тултарассишĕн пыракан кĕрешĕве хутшăнман колхозсем пулмала мар. Вăхăта вăраха йамасăрах вăрман ĕçне массăлăн тухса, 1-мĕш квартăл планне вăхăтра тултарассишĕн кĕрешмелле. Куна тума пирĕн вăй та, условисем те çителĕклĕ.

Механизаципе туллин усă курас пулать

Шупашкар вăрманпромхозĕ 1937 çулти плана тултарассипе Чăваш вăрманпром системинчи лайăх ĕçлекен вăрманпромхоз шутланать. Вăл 1937 çулти плана хатĕрлессипе 119,7 процент, турттарассипе 102,6 процент тултарнă. Унăн пĕрремĕш квартăл планне срукчен тултарма та условисем пур. Трактор çулĕ тата тракторсем те йусав. Ĕç вăйĕ çителĕклĕ. Тутаркас, Ишлей тата Йетĕрне районĕсенчен куллен суранисем 130 çын, лашапа ĕçлекенсем 110 çын ĕçлемелле пулсан, халĕ суранисем 150 çын, лашапа ĕçлекенсем 200 çына йахăн ĕçлеççĕ.

Вăрманпромхоз плана пĕтĕмĕшпе илсен ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать пулин те, унăн ĕçĕнче пысăк çитмелĕхсем пур. Ку таранах çитсе те механизаци вăйĕпе туллин усă курассине йĕр келемен. Трактор çулĕ çинче 5 трактор пур. Вăрманпромхоз директорĕ Михайлов йулташ калănă тăрăх, кашни трактор пĕр рейсра 140 фесметр турттарса тухас вырăнне, 250 фесметр турттарса тухать.

Кун пек ĕçленĕ пулсан трактор çулĕ хăйĕн планне иртерсе тултарма пултарнă. Анчах фактсем урăххи çинчен калаççĕ. Трактор çулĕ иртнĕ çулталăкри плана 90,7 процент çеç тултарнă. Мĕншĕн капла? Мĕншĕн тесен унта тракторсем нормăран иртерсе турттарса тухнине вăхăта шута илмесĕр хисепе илеççĕ. Тракторсем ĕçлес вăхăтран çунасем çине йăвăç тийенĕ чух пĕр сехет йе ытларах, çавăн пекех пушатнă чухне тепĕр икĕ сехет ахаль тăраççĕ. Çаксене шута илсен трактор мĕн пама пултарнинчен çурри не çеç пана курăнать.

Çунасем çине йăвăç тийес тата пушатас ĕçе йĕркеленĕ, механизациленĕ пулсан, трактор рейсра пулас вăхăта чакарма условисем çителĕклĕ. Тийес, пушатас ĕçре усă курмали механизмсем вăрманпромхозрах пур. Вĕсемпе усă курма вĕренни çеç кирлĕ. Анчах вăрманпромхоз руководителĕсем тата инженерла-техникла работниксем вăл ĕçпе интересленмеççĕ.

Механизаципе усă курасси пур вăрманпромхозсенче те начар пырать. Тракторăн рейс вăхăтне кĕскетесси çине нисăта та тивĕçлĕн çавăрăнса пăхмаççĕ. Малашне ку ĕçе вăйлатсах пыма вăрманпромхозсем, трактор çулĕсем хушшинче ăмăрту пуçарса, пĕр пĕрин ĕçне тĕрĕслесех пырассине организацилемеле.

Механизациленĕ çулсем çинче пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен тракторис-стахановецсем вуншарăн шутланаççĕ. Шупашкар вăрманпромхозĕнчи тракторис Степанов куллен нормăна 288 процент тултарать. Вăл кашни рейсрах 320 кубла метр ытла йăвăç турттарса тухать. Çавăн пекех Сорокин та пысăк теслĕх ем парать. Пур трактористсене те лайăх ĕçлеме вĕрентме Степановпа Сорокин пек стахановецсен опычĕсене анлăн сарса пымала. Кăна техникă вĕр нтĕвне лайăх йĕркеленĕ никĕс çинче туса пырас пулать. Механизацин пĕтĕм вăйĕпе, пултарулăхĕпе туллин усă курма техникăна алла илнĕ çын çеç пултарать.

М. Т.

Арман авăрма пуçланă

Шуршăлти (Сĕнтĕрвăрри р.) Блюхер йачĕпе тăракан колхозра декабĕрĕн 26-мĕшĕнче двигательпе ĕçлекен арман туса çитерчĕç. Арман 18 лаша вăйлĕ двигательпе ĕçлет. Халь çак арманта колхозниксем хăйсен тыррисене авăртаççĕ.

В. Васильев.

Каникула усăлă иртеретпĕр

Епĕр, Йĕкĕрварти вăтам шкулта вĕренекенсем, хĕллехи каникулти вăхăта усăлă иртерме план турăмăр. Планра каникул вăхăтĕнче шашкă-шахмăт вăййин турнирĕ, 2 хут спектакль тата 3 вечĕр туса иртерме палăртнă. Йанварĕн 1-мĕшĕнче çĕнĕ çул йачĕпе йолкă туса иртертĕмĕр.

Й. Тимофейев.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Клара Цеткин йачĕпе тăракан çĕвĕ фабрикĕнчи çĕнĕ çул балĕнче. (Мускав).

А. Грибовски фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Типĕтнĕ йăвăç çителĕклĕ кирлĕ

Епĕ çуртсем тăвакан цехра смена мастăрĕ пулса ĕçлетĕп. Анчах ĕçре час-часах çитменлĕхсем пулнă пирки, хăш чухне манăн сменă плана та тултараймаст.

Çитменлĕхсенчен тÿрех çакна палăртмала: типĕтекен цех вăхăтра йăвăçсем типĕтсе памаст. Сменăра йăвăç пулмасан, вăрă ахалех лармала килет. Йăвăç—чи кирлĕ йапала пирĕншĕн.

Стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхĕ иртсен, пире татах та сахал вутă пама пуçларĕç. Декабĕрĕн 13-мĕшĕнче—3 вагон, 14-мĕшĕнче—2 вагон, 15-мĕшĕнче—1 вагон вутă пачĕç. Паллах, кун пек тăратсан йĕркелĕн ĕçлеме çук. Хăшпĕр чухне тата вутăсене лайăх типĕтмесĕрех пирĕн пата йараççĕ.

Материалсене те хамăрах йăтатпăр, станоксем патне илсе пырса парассине йĕркелемен. „Мĕншĕн цех çумне илсе пырса памастăр", тесен, автогаражра ĕçлекенсем: „пирĕншĕн пулсан, хуть те мĕн тăвăр", теççĕ.

Манăн сменăри рабочисем çителĕклĕ таран материал парсассăн хаваслансах ĕçлеççĕ. Вĕсем пĕрер нормă кăна мар, икшер нормă таран тултарса ĕçлеççĕ. Акă, сăмахран, М. Самолкина—190 процент, Морозова—170 проц., М. Чернова—150 проц. ытла тултарса пыраççĕ.

Ноябĕр уйăхĕнче (1937 çулта) материалсене перекетленĕшĕн комбинат администрацийĕ мана 72 тенкĕ прогрессивкă йĕркипе хушса пачĕ. Чăнах та тăрăшса ĕçлес килет. Материал çителĕклĕ памании çеç мана чăрмантарать. Пурте çителĕклĕ пулсан хĕпĕртесе, савăнса ĕçлетпĕр.

Пирĕн комбинатра материалсем çитмен пиркиех цехсем плана тултараймаççĕ. Çавăнпа стахановла йухăм питĕ вăраххăн сарăлса пырать.

Куславкка комбинатĕнчи сменă мастăрĕ—В. Никифоров.

Оборонă ĕçне вĕренеççĕ

Улатăрти транспорт ĕçне вĕрентекен комбинатра оборонă ĕçне вĕренессине лайăх йĕркеленĕ.

Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче 189 вĕренекен ПВХО значокĕн нормисене тата 5 вĕренекен Ворошилов пек тĕл перекенсен нормисене парса значоксем илчĕç.

Кăçалхи çул техникумри студентсемпе ФЗУ шкулĕнче вĕренекенсем 100 çын ПВХО значокне тата 50 çын Ворошилов пек тĕл перекенсен значокне илме хатĕрленеççĕ. Вĕсемех ГТО значокне илме хĕллехи нормăсене пама пуçларĕç.

В. С. Севрÿгин.

Техминимума 30 çын вĕренеççĕ

ТРАК. Çĕнйал Шетмĕри „Трудовик" аласталăх ертелте чăптаçă-стахановецсем хушшинче техминимума вĕренессипе семинар организацилерĕç. Ку семинара вĕренме 30 çын çÿрет.

Т. Архипов.

Клепальщчик Горйачев

Василий Горйачев Канашри вагонсем йусакан заводра товарнăй комбинатра клепальщчик пулса ĕçлет. Унăн лайăх ĕçĕ ытти рабочисемшĕн те пример. Вăл ĕçленине курсан, ĕçлес кăмăл çĕкленет.

Горйачев вагонсене йусакан çĕрти группавод. Унăн группи йалан малта пырать. Кунне пĕр вагон йусамала пулсан, вĕсем йалан 2—3 вагон йусаса кăлараççĕ.

Кунта кашни çынна хăйне ĕç уйăрса панă. Ĕçлекенсенчен никам та пĕрне-пĕри чăрмантармасть. Техникăна пĕлни тата тимлĕн ĕçлени—çаксем унăн лайăх ĕçĕн никĕсĕсем.

Тухăçлă ĕç туни, ĕçхатĕрĕсем йĕрĕп, çивĕч пулнинчен те килет. Анчах хăшпĕр чухне автоген, йе сывлăш çителĕклĕ таран тăратаймаççĕ. Кун пек чухне Горйачев йулташ хытă тарăхать. Цех начальникĕ, профгрупорг патне кайса, мĕнле сăлтавсем ĕçлеме чăрмантарнине тĕрĕслесе пĕлет. Вĕсене хăйĕн шухăшĕсемпе ĕçĕсем çинчен каласа парать.

Горйачев йулташ уйрăмăнах çак йулашки вăхăтсенче аван ĕçлеме пуçларĕ.

— Ĕçрен мĕншĕн хăрас, вăл сана хăратăр. Кăçалхи çул—Сталинла виççĕмĕш пйатилĕкăн пĕрремĕш çулĕнче лайăхрах ĕçлеме пулатăп,—тет Горйачев йулташ.

Унăн ырă примерĕпе ытти рабочисем те лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Акă Талытин йулташ куллен нормăна 300 процент таран тултарса ĕçлеме пуçларĕ.

(Хамăр корр.).

Стольарсен группи

КАНАШ. Вагонсем йусакан заводри стольарсенчен Прокопий Гурйанов группи малта пырать. Унăн группинче пĕтĕмпе виçĕ çын ĕçлеççĕ.

Ĕçе лайăх организациленипе ку группă хăйĕн планне йалан тултарса пырать. Декабĕр уйăхĕнче иртерне стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхĕнче стольарсем нормăсене 200-шер процент тултарса ĕçлерĕç.

Ĕçĕн секречĕ çакăнта çеç: кашни ĕçлекенех кунта хăйĕн ĕçне пăхать, вăхăта урăх ĕçпе иртермест. Подручнăй Романов стойкасем лартать, Кармалов (вăл стольара вĕренет) детальсене болтсемпе çыпăçтарса йĕркелет. Рамăсене вырнаçтарас, урайсене çыпăçтарас çĕрте Гурйанов йулташ хăй ĕçлет. Пурте хăй участокĕнчи ĕçĕшĕн ответлă.

Çапла ĕçленипе те ĕнтĕ вĕсем 21 сехет хушши ĕçлемелли ĕçе 10—12 сехетрех ĕçлесе пĕтереççĕ. Ĕçĕн пахалăхĕ те лайăх.

1938 çулта Гурйанов йул. группи татах та хăстарлăн ĕçлеме пулать.

— Сталинла виççĕмĕш пйатилеткăн пĕрремĕш çулĕ пирĕншĕн производствă ÿсĕмĕ пысăк улшăнулă çул пулса тăмалла. Ĕçлеме пур детальсемпе инструментсем те пулсан, 200 процент мар, 1937 çулта тунă ÿсĕмсенчен 3—4 хут ытларах тума пулать,—теççĕ стольарсем.

(Хамăр корр.).

Орфографи ыйтăвĕсене сÿтсе йавнă май

Вăхăтлă ыйту

Чăваш орфографине „Ь" саспаллине кĕртме сĕнни тĕрĕс. Ку йапала вăл чăваш чĕлхине вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене пăтраштармасăр тĕрĕс çырма май парать.

Пирĕн шутпа „Л" саспаллине сăмах варринче варăмланман çинчен иккĕлетсе çырни кирлĕ мар.

Ку таранччен чăваш грамматикинче Э, Я, Ю, Щ, Ь, Ъ саспаллисем пулман. Малалла çав саспаллисем пирĕн тăван чĕлхене кĕрсен, ку пире, чăваш ачисене, вырăс чĕлхине çăмăлрах лайăххăн тишкĕрсе вĕренсе пыма май парать. Вăл саспаллисенчен Ю, Я, Щ тесе çырас вырăнне кивĕ чăваш грамматики тăрăх ЙУ, ЙА, ШЧ тесе çыратпăр. Кун пек çырнинче пирĕн шутпа тухăçлăх сахал. „Щукин", „щетка" сăмахсене малала епĕр чăвашла та çакăн пекех улăштармасăр çырасшăн. Чăваш чĕлхи ытти чĕлхесем пекех, вырăс чĕлхинчен кусакан сăмахсемпе пуйанланса, патварланса пырать. Вăл вырăс грамматикин прийомĕсемпе питех те тача çыхăнса тăрать.

Çакна каласшăн та епĕр: урăх чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсенчен нумайĕшне, вĕсем мĕнле илтĕнеççĕ, чăваш грамматикинче те çавнашкалах çырмала: „Юманите", „социализм", „ленинизм", „эмпириокритицизм", „Октябрь" т. ыт. те.

„З" саспаллине чăваш грамматикине тахçанах кĕртнĕ ĕнтĕ. Анчах та вăл саспаллипе епĕр пур сăмахсенче те çителĕклĕ таран усă курайман. Епĕр пĕр сăлтавсăрах „большевисăм", „интернационали сăм", „коммунисăм" тесе çырнă.

Кунта вара „ă" сасă тухса ÿксе сăмах кĕскелет.

Çавăн йышши сăмахсем чăваш чĕлхине килсе кĕчĕç пулсан, вăл сăмахсем вара урăх чĕлхе сăмахĕсем пулмаççĕ, чăваш сăмахĕсемех пулаççĕ.

Çавăнпа та „ку сăмахсем вырăс сăмахĕсем, вĕсене вырăслах çырмала" тени тĕрĕс мар пулать. Нумай сăмахсем пирĕн чĕлхене хăйсен малтанхи формине сухатмасăрах кĕрсе вырнаçма пултараççĕ. Вĕсене епĕр формăпа содержанийĕнчен улăштармасăрах çырасшăн.

Йулашкинчен „класс" йышши сăмахсем падежсем тăрăх вĕçленнĕ чухне йепле çырасси çинчен каламала. Ку йышши сăмахсене çырас пирки Резйуков йулташ хăйне май анлантарса пачĕ. „Класс" сăмах йат падежĕнче, ытти сăмахсем пекех, подлежащчи пулать. Вăл сăмах йат мар падежсенче тăрсан та „класс" тесех çырăнмала. Мĕншĕн-ха вăра йат падежĕнче тăрса „класс" çырăнать, а ытти падежĕнче „класăн" пулать?

Вырăс грамматикинче вăл сăмах пур падежсенче те икĕ „с" çырма ыйтать. Пирĕн те çавнашкалах çырмала.

Пирĕн чăваш грамматики çакăнта асаннă сăмахсенче çеç мар, пур кирлĕ вырăнсенче те вырăс грамматикипе çыхăнса пымала.

А. Нестеров.

Райĕçтăвком мĕн пăхать-ши?

Уйкас йалсовечĕ (Йетĕрне р.) пур ĕçре те кайа йулса пырать. Укçа-тенкĕ пухас плана ку таранах çитсе те 35 процент кăна тултарнă. Политикăлă массăлă ĕçе йăлтах манăçа хăварнă. Суйлавçăсен наказне мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен пĕре те очот туса паман. Йалсовет председателĕ Петрухин айăпĕпе ситĕннисен шкулĕ те ĕçлемест.

Петрухин пĕве тунă çĕрте начальник пулса ĕçленĕ. Унта вăл киревсĕр ĕçсем тунă. Столовăй укçинчен 3083 тенкĕ саватнă, строительствă материалĕсене тустарса пĕтернĕ. Вăл хăйĕн сывăх çыннине, мелиоратор Аникина, пĕве тума илсе килнĕ йăвăçран пĕр пÿрт лĕх йăвăç панă.

Петрухинăн ирсĕр ĕçĕсем çакăнпах пĕтмеççĕ-ха. Вăл Çуткасси колхоз хуралçине Никитина хуралра тăнă вăхăтра хĕнесе пĕтерне. Петрухинăн çакнашкал ирсĕр ĕçĕсене райĕçтăвком председателĕ Малинин йулташ лайăх пĕлет. Çапах та ăна тивĕçлипе ответ тыттарма пухăшламаст.

М. Йемелйанов.

Йалти çамрăксен пултарулăхĕ

Çĕнйал Шетмĕри (Трак р.) çамрăксем, комсомолецсем пуçарнипе, январĕн 2-мĕшĕнче йалти сцена çинче Осиповăн „Айдар" пйесине лартса пачĕç. Спектакль курма пуханнă халăх „Айдар" пйесăна тата вылякансене мухтарĕ. Халĕ çамрăксем çак кунсенчех çывăхри Пикшик, Кулава, Парăнтăк йалĕсене кайса „Айдар" пйесăна лартса пама хатĕрленеççĕ. Драмкружокпа пĕрлех шавла оркестр тата хор кружокĕсем те кайаççĕ.

Ив. Сергеев, Т. Архипов.

Партилĕ хаçат шкулĕнче татăклă улшăнусем тумала

ПСК(б)П Обкомĕ çумĕнче партилĕ хаçат шкулĕ усăлни кăçал иккĕмĕш çул çине кайрĕ. Шкулăн тĕп задачĕ—районри тата облаçри хаçат редакцийĕсенче ĕçлеме политикă тĕлĕшĕнчен çирĕп, большевисăмпа хĕçнăшаллаппă, халăх тăшманĕсемпе çивĕччĕн кĕрешме пултаракан кадрсем хатĕрлесси пулать.

1937 çулта шкул директорĕ Карташов Чăвашсен педагогикă рабфакĕнче вĕреннĕ троцкис Медведева вĕренме илет. Çак троцкис хаçат шкулне вĕренме кусçанах хăй тавра тин çеç çырма пуçланă çăвăççене (Задоров, Тороней тата ыт. те) йавăçтарнă. Вĕсене вĕренÿрен пăрса Иесенйăн йурăхсăр çăввисене вулама сĕннĕ.

Çак ĕçсем çинчен студентсем парторг Йастребова, комсомол комитечĕн секретарне Цветкова вăхăтра пĕлтернĕ. Анчах вĕсем Медведев пирки нимĕн те туман, вăл чылай вăхăт хушши комсомол ретĕнче шутланса тăнă.

Халăх тăшманĕсене пулăшакан Чиркова шкулта студентсем хушшинче Совет Союзĕ çинчен елек сарнă. Çак елекле ĕç çинчен комсомолецсен нухувĕнче Н. Кулебйанов ыйту тапратсан. Н. Иванова (профком председателĕ), Йастребов (парторг) Чирковăна хÿтĕлеççĕ. Çаксемех Чирковăна комсомолăн Шупашкар хулинчи конференцине кайма делегат тата шкулти комсомол комитечĕн бÿро членне суйланма пулăшрĕç.

Конференцинче Чиркова унăшки (халăх тăшманĕ Казаков) çинчен сăмах тапратсан, вăл: „Епĕ унăшкапа пĕрле пурăнмастăп" тесе икĕпитленнĕ. Чиркова конференци хупăнсанах хăйĕн унăшкине—Казакова конференци ĕçĕсемпе решенийĕсем çинчен пĕтĕмпех каласа панă.

Шкулти комсомол организацийĕ Чиркована комсомолтан кăларчĕ. Анчах шкул директорĕ Картанов: „Пирĕн шкулта партире тăманнисем те, комсомолта тăманнисем те вĕренме пултарăççĕ",—тесе шкултан кăларса йамасăр чылай вăхăт тытса усрарĕ.

З. С. Цветков 1936 çултан пуçласа кăçалччен комсомол комитечĕн секретарĕ пулса ĕçлерĕ. Цветков йăла тĕлĕшĕнчен пĕтĕмпех пăсăлса кайнă çын. Ку тарана çитсе 5 хут авланнă.

ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленес ĕçре районри хаçатсене пулăшма студентсене пĕр уйăх çуралăх практикăна йарсан, Цветков Йĕпреçре тата тепĕр хут туй туса авланать. Унта ĕçкĕ-çикĕпе иртĕнме пуçлать.

Комсомол организаци ĕçне пухăнтарса йанă. Вĕренекен комсомолецсем хушшинче нимĕнле политвоспитани ĕçĕ те çук, общественлă организацисем ĕçлемен. Вĕренекенсем хушшинче ĕçкĕ-çикĕ сарăлнă. Комсомол комитет членĕсем хушшинче ушкăнлă ĕçкĕсем организациленĕ.

Йастребов шкулта чылай вăхăт хушши парторг пулса ĕçлерĕ. Вăл студентсене ĕçкĕ-çикĕпе вĕрентнĕ. Шкулти дисциплинăна пăснă.

Йастребов шкула вĕренме кĕрсенех директорпа туслашса кайат. Директор ăна пичет кабинечĕн пуçлăхĕ туса хурать, унăн йămăкне хăй патне секретарь илет. Ăна хватор укçи те ытти студентсенчен ытларах тÿлесе тăрать.

Йастребов ку тарипчен пичет кабинечĕн пуçлăхĕ пулса студентсене нимĕнле пулăшу та паман, ĕçлемесĕрех уйăхне 100 тенкĕ илсе тăрать.

Вĕренекенсем практикăна кайсан, Картанов—Йастребова „практикăна йертсе пыма" шкула хăварать. Анчах Йастребов нимĕн те туман.

Шкулта критикăпа самокритикă кирлĕ вырăнта мар. Пухусенче троцкиссене, халăх тăшманĕсене тата йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнă елементсене вирлĕн критиклекен студентсене Йастребов та та Н. Иванов йалан тĕрлĕрен майсемпе хĕсне хăратнă. Парти организацийĕ, комсомол организацийĕ хирĕç пыратăр тесе ыйту лартнă. Йастребовăн киревсĕр ĕçĕсене критикленĕшĕн Кулебйанова комсомол комитечĕ выговор панă, çавăншăнах Иванова, Шаброва асăрхаттарнă.

Вĕсене пулăнма йалан Картанов сиксе тăнă. Шкултан кăларса йарассине хăратнă.

Шкулта стена хаçачĕ тухмаст. Пĕтĕм тĕртенпе мĕн пурĕ те 2 номер кăна тухнă. Хаçат тухма майĕ те çук. Профком председателне Н. Иванова, стена хаçат редакторĕ туса лартнă. Н. Иванов шкулти çитменлĕхсене хаçат урлă тăрăшыв çине кăларасран шикленет. Хăйне хÿтĕлекен Йастребов çинчен çырнă заметкăсене кĕртмесĕр тăнă.

Çак йĕркесĕрлĕхсем çинчен каланă май, преподавательсен составĕ çинчен каламасăр нийепле те иртсе кайма май çук. Вĕсен ретĕнче троцкиссем пулнă (Краснов—Асли, Гудйургис). Пĕр вăхăтра Краснов—Асли шкулта вĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлерĕ. Çак тĕслĕхсем директорпа урок пулса тăман, пайанхи куна çитсе те преподавательсен составне тĕрĕслемен.

Шкулта уйрăм дисциплинăсемпе вĕренÿ планĕ пурнăçланмаст. Акă 1936 çулхи сентабĕрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1937 ç. апрелĕн 1-мĕшне çитиччен вырăс чĕлхине 113 сехет, чăваш чĕлхине 109 сехет, географине 141 сехет вĕренмесĕр йулнă.

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн агитаципе пропагандă тата пичет пайĕн пуçлăхĕ Раскин хаçат шкулĕ çине çавăрăнса та пăхман. Шкула преподавательсем парас сиррĕн тăрăшман.

Малала çак йĕркесĕрлĕхсене чăтса тăма нийепле те май çук. Критикăпа самокритикăна анлăн сарса, шкулта халăх тăшманĕсене пулăшакансене, йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнă елементсене хÿтĕлесе, самокритикăна хĕссе пынă Йастребов, Н. Иванов, Картанов, коммунистсене тăрăшыв çине кăларса шкулта пысăк улшăнусем тумала.

П. Архипов.
М. Иванов.
П. Йаргункин.

Суту-илÿ ĕçĕнчи çитменлĕхсем

СĔНТĔРВĂРРИ. (Хамăр корр.). Йанварĕн 4-мĕшĕнче район центрĕнче суту-илÿ организаци руководителĕсен, йалпо правлени председателĕсен, коопераци профессилĕ сойузĕн уполномоченнăйĕсен тата хатĕрлев работникĕсен канашлувĕ пулса иртрĕ.

КОГИЗ магазинĕн уйрăмĕ çулталăкри таварçавăрнăш планне йанварĕн 1-мĕшне 123 процент тултарнă. Аптекоуправлени магазинĕ çулталăкри таварçавăрнăш планне 128 процент тултарнă. Çавăн пекех, Кулътмаг, Ĕсмĕрли йалпо хăйсен планĕсене ытлашшипех тултарнă. Çулталăкри таварçвăрнăш планне тултарас тĕлĕшпе, Ĕсмĕл йалповĕ, Пукаш йаповĕпе Кулътмаг Шуркасси йалповĕпе ăмăртса ĕçленĕ. Ку магазинсемпе йалпосем пасарсемпе йармăркăсене йаланах тухса çÿренĕ. Вăл магазинсемпе йалпосен лавкисем таса, лайăх, йĕркелĕ. Таварсене кирлĕ пек вырнаçтарнă. Продавецсем суту-илÿ ĕçне вĕренсе пыраççĕ. Тавар илекенсемпе йаланах йĕркелĕ пулаççĕ, вĕсем халăха куллен кирлĕ таварсене тупса парассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Çак хушăрах хăшпĕр йалпосем йачĕшĕн çеç ĕçлесе тăраççĕ. Амачкино йалповĕпе Турханкасси йалповĕ пĕр-перинпе социалисăмла ăмăртăва хутшăнам пекки тунă. Анчах ку йалпосем тавар çавăрнăш планне тултарассишĕн хăйсем хушшинче ăмăртава тухса договор çырнисĕр пуçне урăх нимĕн те туман. Амачкино йалповĕ çулталăкри плана 75 процент, Турханкасси йалповĕ плана 66 процент кăна тултарнă. Çавăн пекех Пукаш йалповĕ плана 72 процент, Кĕчкей йалповĕ плана 42 процент, Шуркасси йалповĕ плана 95 процент çеç тултарнă.

Йалпосем çулталăкри таварçавăрнăш планне тултарманни, продавецсем пасарсемпе йармăркăсене тухса çÿременнинчен те нумай килет. Шуркасси йалповĕн Тури Макаçри уйрăмĕ (продавец Кириллов) лавкара ернере те 2—3 кун кăна сутă тунă, вăл нихçан та пасарсемпе йармăркăсене тухса çÿремен. Лавкара сутă туман кунсĕнче хăйне сывăх çынсем патĕнче ĕçкĕре çÿресе иртернĕ. Лайăх, паха таварсене халăха кăтартмасăр кумĕсемпе тăванĕсене вăрттăн сутнă. Çак йĕркесĕрлĕхсемшĕн ăна комиссипырса тĕрĕслесен ĕçрен кăларма хушнă. Çапла пулсан та ăна халĕ те çак лавкарах ĕçлеттереççĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнче магазинсемпе йалпо правленисене кĕрсе вырнаçнă жуликçемпе, растрачиксемпе кирлĕ пек кĕрешмеççĕ. 1937 çулта лавкасенче тăшманла çынсем кĕрсе вырнаçса нумай растрата тунă. Турханкасси йалповĕнче Йевдокимов правлени председателĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра 14 пин тенкĕ растрата тунă. Кĕчкей йалповĕнче (правлени председателĕ Агатейев) 7300 тенкĕ растрата тунă, кунсăр пуçне Агатейев йалпо укçине 1900 тенкĕ вăрласа хăй кăсйине чикнĕ. Тата вăл 1937 çулта ытти майсемпе те йалпона сăтăрласа 10 пин тенкĕлĕх ытла усăсăр тăкак тутарттарнă. Çапах та ăна халь суд аллине парса айăпламан. Тури Карапаш йалĕнче колхоз председательне кÿртсе лартнă. Çакна ПСК(б)П райкомĕпе райĕçтăвком та пĕлеççĕ, çапах та нимĕн те тумаççĕ.

Районри магазинра та растратчиксем нумай сăртăр тунă. 1936 çулта раймаг çулталăкри плана 100 процент тултарнă пулсан, 1937 çулшăн пурĕ те 80 процент çеç тултарнă. 1937 çул хушшинче 6782 тенкĕ растрата тунă. Уйрăмах апат-çимĕç пайĕнчи продавецсем Васçилйевпа Труднев 6500 тенкĕ растрата тунă. Вĕсене ĕçрен кăларсан çак уйрăмах Клементйева продавеца кÿртнĕ. Клементйевĕ те кĕске хушăрах 567 тенкĕ растрата тунă. Ăна кăларса йанă хыççăн, Москвина ĕçлеме лартнă. Ку çĕнĕ продавецĕ те 3—4 кун хушшинчех 420 тенкĕ растрата тума ĕлкĕрнĕ. Сĕнтĕрварри районĕн магазинĕнче халĕхи продавецсем те шанчăклă мар. Хăшпĕр таварсене вăрттăн сутма хăтланаççĕ. Акă халь нумайах та пулмасть 25 мăшăр калуша пытартса хăварса вăрттăн сутма тăни пулнă.

Растратчиксемпе кĕрешес çĕрте районри судпа прокуратурă çителĕклĕн ĕçлемеççĕ. Иртнĕ çулта кулътмагра ĕçленĕ Анцунов 3328 тенкĕ те 30 пус растрата тунă. Ăна 1937 çулхи йанвар уйăхĕнчех ĕçрен кăларса суда панă. Анчах çак растратчик ĕçне пайанхи куна та пăхса тухман. Вăл халĕ Тутаркас районĕнчи Урпаш йалĕнче учительре ĕçлет. Амачкино йалповĕнче ĕçленĕ Соломонов йалпо укçине 973 тенкĕ те 84 пус, Турханкасси йалповĕнчи продавец Никитин Гаврил 2982 тенкĕ, Майков 2681 т. 78 пус, çак йалпорах бухгалтерте ĕçленĕ Шумов 1500 тенкĕ растрата тунă.

Çак асăннă çитменлĕхсене пĕтересси çине судпа прокуратура, ПСК(б)П райкомĕпе райĕçтăвком киревсĕрле пăхнине пула район таварçавăрнăш планне пурĕ те 85 процент çеç тултарчĕ.

Суту-илÿ ĕçне анлăн сарса йарас шутпа Сĕнтĕрвăрринчи кулътмаг кашни уйăхрах 30 пинрен кайа мар тавар сутма пулса Кĕчкей йалпоне социалисăмла ăмăртăва чĕнчĕ. Районри магазин 120 пин тенкĕрен кайа мар сутма пулса Чăвашторг уйрăмне, Амачкино йалповĕ 100 пин тенкĕрен кайа мар сутма пулса Турханкасси йалпоне, Шуршăл йалповĕ 60 пин тенкĕрен кайа мар сутма пулса Шуркасси йалпоне, Ĕсмĕл йалповĕ 100 пин тенкĕрен кайа мар тавар сутма пулса Пукаш йалпоне ăмăртăва чĕнчĕç.

Чăвашсойузран района йанвар уйăхĕнче 535 пин тенкĕлĕх тавар сутма задани панă. Канашлу 630 пин тенкĕрен кайа мар сутмала, тесе йышăну илчĕ.

Суту-илÿ ĕçне тĕпрен улăштарса кирлĕ пек йĕркелес майпа Сĕнтĕрвăрри районĕ Куславкка районĕпе социалисăмла ăмăртăва тухрĕ.

В. Васильев.

ЙЕГИПЕТРИ ĔÇСЕМ

Йегипет вăл Африкăн çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче. Унăн территорийĕ пĕр мĕлйун тăваткăл километра йахăн йышăнать, анчах 33 пин тăваткăл километр талкăшĕнче çеç (Нил- йуханшыв лапамĕнче) çĕр ĕçлеççĕ. Йегипетра 16 мĕлйун çын пурăнать, вĕсенчен çурри ытла арабсем. Çапла вара Йегипетре пĕр тăваткăл километр çĕр çинче пилĕкçĕр çынна йахăн пурăнать.

Йегипет Англи колонийĕ пулса тăрать, Англишĕн ековомикăлла пысăк вырăн йышăнать. Вăл Англин пиравăр фабрикисене çĕрмамăкĕ тăратать.

Хĕвелтухăç йенче Йегипет Суецк каналĕпе чикĕленет. Кам Йегипетшĕн Суецк канала тата хĕвелтухăçри Африкăна кайакан пĕртен-пĕр кĕске çула—Суецк каналне те çавă тытса тăрать. Акă мĕншĕн Англи Йегипетшĕн çирĕп тăрать.

Итали Абиссинине тытса илнĕ хыççăн, Италипе Англи хушшинчи хирĕçÿсем çивĕчленчĕç. Хĕрлĕ тинĕс хĕрринче Абиссинипе Еритрейăна тата Инди океанĕ хĕрринчи Итали Сомалине тытса тăрса, Италин хăйĕн колонийĕсемпе пĕр чăрмавсăрах çыхăну тытма тата Англине пăхăнмасăр пуласшăн тăрăшать. Çавăнпа та фашисла Итали Ватăçĕр тинĕспе Суецк каналне Англирен тытса илме, Ватăçĕр тинĕсне „Итали кулли" туса хума тата „Тинĕссен хуçи" пулма хăйĕн империализмăлла планĕсене тăвать.

Çак ĕмĕтсене пурнăçа кĕртес пулсан, Италин араб çĕршывĕсенче тата, чи малтан, Йегипетпа Палестинăра Англи пуçпулса тăнине пĕтермелĕ.

Вăл çĕршывсенче Британийĕ хирĕçле пропаганда туса, Англи политикине килĕшмен елементсене материаллă пулăшу парса, Итали унта хăйĕн пур майсемпе Англишĕн политикăлла пысăк йăвăрлăхсем тума тăрăшать.

Итали сĕмсĕрленсе кĕрсе йĕкĕлтенипе те ĕнтĕ Йегипетра халĕхи вăхăтра политикăлла кризис пулна—правительствă отставкăна тухнă. Вăл правительствăна Йегипетри политикăлла пысăк партин—Вафд партин руководителĕ Махас-паша йертсе пынă. Çав правительствă отставкăна тухнă хыççăн влаçа Мухаммед Махмуд-пашăн пуç пулса тăракан реакцилĕ правительствă ларнă.

Вафд партине 1919 çулта тунă, вăл парти Йегипет буржуазипе помешчиксен тата интеллигенци интересĕсемшĕн тăрать. Вафд партийĕ масса хушшинчи хăйĕн влиянине вайлатас тесе, Йегипета политика тĕлĕшĕнчен никама пăхăнмала мар туса çитерес лозунгĕшĕн кĕрешет, Вăл партин 1936 çулта влаçа ларса, Англипе Итали хушшинчи хирĕçÿсемпе усă курсе, Англипе Йегипет хушшинче договор тума пултарнă.

Йегипетри буржуазипе помешчиксен чи реакцилĕ елеменчĕсем Вафд ĕçĕнче хăйсен интересĕсемшĕн хăрушлăх пуррине курнă. Весем Вафд правительствине сирсе пăрахас тĕллевпе Вафда хирĕç хăварăн кĕрешнĕ. Оппозици руководителĕсене, халĕ çĕнĕ правительства составне кĕнĕскерсене—Мухаммед Махмуд-пашана тата Измаил Сидки-пашана, Италипе туслă договор тăвасшăн тăракансерсене—Йегипет королĕ хапăл туса хута кĕнĕ. Оппозици çĕне Италин Йегипетри фашисла агентури тата çавнашкалах Италин фашисла пичечĕ вайлăн хута кĕнĕ. Çĕнĕ правительства составĕнче мĕнле çынсем тăни тăрăх тата унăн малтанхи ĕçĕсем тăрăх, вăл правительства демократилĕ йухăма хирĕç пыракан реакцилĕ политикăна пурнăçа кĕртес пырать тесе шухăшлама пулать. Халĕ ĕнтĕ Вафд тунă тата вăл пулăшса йертсе пыракан нумай массăлла организацисене саплатса йанă. Йегипет королĕ парламента пĕр уйăхлăх салатса йама приказ кăларнă.

Йегипетри пысăк ĕçсем пулсассăн. Рабочисем, хресченсем тата интеллигенци çĕршывра йăвăр пурнăç пуçпулса тăнипе килĕшмеççĕ. Çĕнĕ правительствăн Итали хыççăн кайма тăрăшакан шултра буржуазипе помешчиксен пĕчĕк ушкăне çине çех таянса тăрать, унăн массăра ниçмĕнле тĕрек те çук.

Чаплă фильм

Йанварĕн 5-мĕшĕнче Мускаври пысăк кинотеатрсенче „И. В. СТАЛИН ЙУЛТАШ МУСКАВРИ СТАЛИНСКИЙ СУЙЛАВ ОКРУГĔНЧИ СУЙЛАВ УМĔНХИ ПУХУРА КАЛАНА САМАХ" йатлă саслă документлă фильм кăтартнă.

Сталин йулташ ку сăмаха 1937 çулхи декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Пысăк театрта каланă.

Мускав ĕçсыннисем фильма пысăк хаваслăхпа кĕтсе илнĕ. Фильм кăтартнă вăхăтра халăхпа тулса ларнă кинотеатр залĕсенче час-часах тăвăллăн алă çупнă.

Чаплă документлă фильма пĕрремĕш кунĕнче 40 пин çын пăхса итленĕ.

(ТАСС).

Мейерхольд йачĕпе тăракан театра пĕтерни

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусствă ĕçĕсен комитечĕ Мейерхольд йачĕпе тăракан театр совет искусствишĕн тăшманла, буржуалă, формалисла позици çине пăрăнса кайнă тата совет çыннисемшĕн тăшманла пулса тăнă тесе йышăннă.

Совет драматургăн пйесисене лартас тĕлĕшпе театр пĕтĕмпех банкрута тухнă. Вăл пйесăсене лартни совет чăнлăхĕ çинчен тĕрĕс мар, курайман сăнсем панă, иккĕлĕ шухăшсемпе тата тÿррĕнех совета хирĕçле сăмахсемпе тулса ларнă.

Йулашки çулсенче совет пйесисем театр репертуарĕнче пĕрре те йулман. Лайăх актерсем чылайăшĕ театртан пăрахса кайнă, пĕтĕм общетсвăлла тата художествăлла пурнăçран хăйне уйăрса театртан совет драматургĕсем тарнă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусствă ĕçĕсен комитечĕ çапла йышăннă: Мейерхольд йачĕпе тăракан театра, совет искусствишĕн тăшманласкере, пĕтерес; театр труппипе урăх театрсенче усă курас; Мейерхольд малашне театр йенĕпе ĕçлеме пултарасси çинчен уйрăммăн сÿтсе-йавас.

(ТАСС).

Гастингсри шахмăт турнирĕ

ЛОНДОН, йанварĕн 6-мĕш. Рейтер агенстви пĕлтернĕ тăрăх, Гастингсри шахмăт турнирĕн улттăмĕш тур резултачĕсем çакăн пек: Ржешевский Тейлортан, Микенас—Джордж Томасран, Флор—Ферхерстран, Файн—А. Томасран выляса илнĕ. Александер—Керес партийĕ нихăшĕ те çĕнтерейменнипе пĕтнĕ.

Кунсăр пуçне тата Микенаспа Флорăн урăх вăхăта хăварнă партине выляса пĕтернĕ. Микенас Флортан выляса илнĕ.

ЛОНДОН, йанварĕн 6-мĕш (ТАСС). Гастингсри шахмăт турнирĕн йулашки 9-мĕш тур çакăн пек резултатсемпе пĕтнĕ: Ржешевский—Керес партийĕ нихăшĕ те çĕнтерейменнипе пĕтнĕ, Александер Микенасран выляса илнĕ. Файн—Флор, Ферхерст — Джордж Томас тата Тейлор—А. Томас партийĕсем çĕнтерÿ никама та пулмала маррипе пĕтнĕ.

Матч шучĕ çакăн пек: Ржешевский—7 очко, Александерпе Керес—6,5 очкошар, Файнпа Флор—6-шар очко, Микенас—5, Джорж Томаспа Тейлор—3-шер, Ферхерстпа А. Томас—пĕрер очко.

Кĕскен

** СĔНТĔРВĂРРИ. Йалхуçалăх техникумĕнче вĕренÿ çулĕ пуçланнăранпах автомобилпе трактор ĕçне вĕренмели кружок ĕçлет. Кружокра пурĕ 140 студент вĕренет. Кружок членĕсем кашнийех кĕнекесем туйанна. Техникумăн хăйĕн автомашинăпа трактор пур. Студентсем теорипе мĕн вĕреннине практикăра çирĕплетеççĕ.

** ОРИНĂРИ (Тутаркас р-нĕ) почта агенстви 1938 çулшăн 1203 екземплăр тĕрлĕрен хаçат-журнал сарнă. Хаçат журнал сарас ĕçре уйрăмăнах пĕрремĕш участкăри Михайлов почтальон аван ĕçленĕ. Вăл 1938 çулшăн колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче 800 тенкĕлĕх хаçат-журнал сарнă.

** КАНАШ районĕнчи Сиккасинчи Шмидт йачĕпе тăракан колхозра Мурзуков йулташ пуçарнипе 35 çынран колхоз хорĕ организациленĕ. Хора çÿрекенсем йанварĕн 4-мĕшне 25 тĕслĕ тĕрлĕрен йурă йурлама вĕренсе çитнĕ. Праçникенче йурласа хор хăйĕн пултарулăхне кăтартса парать.

** Кăçал Ишлей районĕнчи „Автан" колхоз радиоприйомник илсе лартнă. Радио итлеме кашни каçах колхоз правленине 20—30 колхозникрен кайа мар пухăнаççĕ. Радио тăрăх Мускавран, Шупашкартан тĕрлĕрен доклад, лекци тата концертсем итлеççĕ.

** Ваçкассинчи (Елĕк р.) Ильич йачĕпе тăракан колхоз радио лартрĕ. Колхозниксем колхоз клубне кашни каçах радио итлеме пухăнаççĕ.

И. Маркелов.

Пирĕн çутçанталăк

ЫЙТУ. Мĕншĕн хĕлле те çуллахи пекех çиçĕм çиçмест, аслати авăтмасть?

Купташкин А., Йелчĕк районĕ, Йаковлев Н., Йĕтĕрне р-нĕ.

ОТВЕТ. Çиçĕм çиçессипе аслати авăтасси атмосферăри хăй тĕллĕн пулакан електрицăран килет.

Çуллахи вăхăтра сывлăш ăшă пулнă пирки електрица чылай пулать. Вăл çăмăр вăхăтĕнче сывлăшран çĕре аннă чухне çиçĕмпе аслати пулаççĕ. Хăш чухне икĕ тĕрлĕ електрица иккĕшĕ те сывлăшра пулаççĕ. Кун пек чухне вара електрица разрйачĕ сывлăшрах пулса иртет. Пăрмай ăшă тăракан вырăнсенче, екватор таврашĕнче, тропиксем хушшинче питĕ вăйлă çиçĕмпе аслатилĕ çăмăрсем пулса иртеççĕ.

Хĕлле хĕвел пирĕн пата ăшă сахалрах парать. Çавăнпа та хĕлле сывлăшăн аялти сийпе çÿлти сийсен температурă уйрăмлăхĕ кăшт анчах пулать. Çакăн пирки сывлăшра електрица запасĕ хĕлле сахалрах пулать. Унтан тата хĕллехи сывлăшра вĕтĕ шыв тумламĕсем, вĕтĕ пăрсем нумайрах. Çавăнпа хĕллехи вăхăтра сывлăшра пулакан електрица пухăнса тăраймасть, икĕ тĕрлĕ електрица зарйачĕсем нÿрлĕ сывлăш тăрăх часах пĕр-пĕрин патне туртăннипе пĕрмай разрйад пулса пырать. Çапла хĕлле пулакан електрица сывлăш нÿрлĕ пулнă пирки пĕрмай пĕтсе пырать. Анчах хĕлле те хăш чухне чылай вăйлă електрица разрйачĕсем пулма пултараççĕ. Куна радиоприйомник пур çынсем сăнама пултараççĕ. Радиоприйомникĕн грозовой перекльучательне çĕрпе пĕрлештерме ĕлкĕреймесен, çиçĕмлĕ çăмăр чухнехи пек, перекльучател çинче пĕчĕк çутă хĕмсем куранаççĕ, çатăртатни илтĕнет. Çакăнтан епĕр хĕлле те хăш чухне чылай вăйлă електрица разрйачĕсем пулма пултарнине куратпăр.

Çуллахи вăхăтра сывлăшри шыв пăсĕ нумайрах пулать пулсан та, вĕтĕ шыв тумламĕсем хĕллехинчен сахалрах. Çавăнпа çуллахи сывлăша хĕллехинчен типĕрех темеле. Типĕ сывлăш тăрăх електрица çÿреймест. Çавăнпа електрица зарйачĕсем çулла нумай пухăнаççĕ. Вĕсем сывлăш нÿрленсе çитсен, çăмăр вăхăтĕнче анчах резрйад тума пултараççĕ. Çавăнпа çуллахи електрица разрйачĕсем хĕллехинчен темиçе вунă хут вăйлăрах пулаççĕ.

Ф. Кузьмин.

Культурăлă-массăла ĕç çук

ЕЛĔК. Кацалăв йалĕнчи „Ĕçлĕх" колхозри çамрăксем хушшинче нимĕнле культурăлă-массăлă ĕç те çук. Колхоз çумĕнче Осоавиахим организаци тата драмкружок органиэацииленĕ. Анчах та вĕсене йертсе пыракан çук. Организаторсем камне те пĕлме хĕн. Колхозăн хĕрлĕ кĕтес пур, унăн организаторĕ Герасимов Иван нимĕн те ĕçлемест. Комсомол пуçламĕш организацийĕн организаторĕ Быков Никит та комсомолецсене политикăла вĕренÿве йавăçтерман. Политкружок ĕçлемест.

Кузнецов.

Радиохаçат ĕçлеме пуçларĕ

Вăрнар районĕнче йанварĕн пĕрремĕшĕнче „Радиопа паракан йулашки хыпарсен" редакцийĕ ĕçлеме пуçларĕ. Редакци кашни уйăхра 15 хут радио тăрăх йулашки хыпарсем вуласа кăтартать.

Н. Козлов.

Çар служăшчисене Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн академийĕсене вĕренме йышăнмали условисем

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн аслă çар-вĕренÿ заведенийĕсен Управленийĕ 1938 çулта 1-мĕш курса кандидатсем йышăнасси çинчен пĕлтерет:

а) РАБОЧИСЕМПЕ ХРЕСЧЕНСЕН ХĔРЛĔ ÇАРĔН ÇАР АКАДЕМИЙĔСЕМ:

Дзержинский йачĕпе тăракан Артиллери академийĕ—Ленинград, ул. Комсомола, 22.

Жуковский профессор йачĕпе тăракан Сывлăш академийĕ—Москва, Ленинградское шоссе, 54.

Куйбышев йачĕпе тăракан Инженерлă академи—Москва, Мокровский бульвар, 5.

Киров йачĕпе тăракан Медицинă академийĕ—Ленинград, Нижегородская улица, 6.

Сталин йачĕпе тăракан Механизаципе моторизаци академийĕ—Москва, Лефортово, Краснокурсантский переулок Д. 3—5.

Каганович йачĕпе тăракан Транспорт академийĕ—Москва, Большая Садовая, 14.

Рабочисемпе Хреченсен Хĕрлĕ Çарне химиле хÿтлемели Ворошилов йачĕпе тăракан академи—Москва, Вторая Баумановская, 10.

Хуçалăх академийĕ—Харьков, площадь Дзержинского, 6.

Буденный йачĕпе тăракан Електротехникă академийĕ—Ленинград, проспект Бенуа, 1.

Ветеринари институчĕ—Москва, Смоленский бульвар, 19.

б) ÇАР ФАКУЛЬТЕЧĔСЕМ:

Подбельский йачĕпе тăракан Инженерла-техникла çыхăну академи факультечĕ—Москва, шоссе Энтузиастов, 109-а.

Пĕтĕм Сойузри права академийĕ çумĕнчи Йуридический факультет—Москва Новинский бульвар, Продольный пер., дом 9.

Командлă факультетсенче вĕренмели срук—3 çул, ыттисенче 5 çул (заньатисем çĕнтăбĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ, нойабĕрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентсе кăлараççĕ).

Вĕренме кĕрес правапа çаксем усă кураççĕ: Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн командирĕсемпе начальникĕсем, вĕсем 35 çултан иртмен пулсан, тата политикăлă характеристикăпа службăри аттестаци лайăх пулсан; командлă факультетсене кĕрес пулсан командир тата начальник ĕçĕнче виçĕ çултан кайа мар стройри стаж кирлĕ, ытти факультетсене кĕме—вăл стаж пĕр çултан кайа мар пулмала; йĕркелĕ вĕренсе пыма, çавăн пекех тата вĕренсе тухнă хыççăн специальнăç тăрăх çар службинче пулма сывлăх йурăхлă пулни кирлĕ; çар округĕн штабĕ çумĕнче (кăçалхи март уйăхĕнче) вырăс чĕлхипе тата математикăпа малтанхи çырулă испытанине çителĕклĕ памала; академи çумĕнче (кăçалхи август уйăхĕнче) вĕренме кĕмели конкурслă екзамĕне ССР Сойузĕн историйĕ тăрăх, ССР Сойузĕн Конструкцийĕ тăрăх, вырăс чĕлхи (сочинени, грамматикă, литература), математикă, физикă, хими, географи, йутçĕршыв чĕлхи тăрăх ăнаçлăн памала, командлă факультетсене вĕренме кĕрескен кандидатсен çакăнта кăтартнă предметсемсĕр пуçне тата, „Вĕренме кĕмели испытани программисен сборникĕ" тăрăх (вăл сборнике Войенгиз кăçалхи йанварте кăларать), çар предмечĕсемпе екзамен тытмала.

Кĕçĕн командирсемпе начальниксен составĕ тата рйадовой состав, тулли вăтам пĕлÿ илнĕ тата Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнче пĕр çултан кайа мар службăра тăнă пулсан, командлă факультетсемсĕр пуçне, пур факультетсене те çÿлте асăннă условисемпех кĕме пултарать.

Кашни факультета чи малтан çав факультет специальнăçĕпе паллашнă кандидатсене йышăнаççĕ.

Кăçалхи мартăн 1-мĕшĕнчен кайа йулмасăр кандидат хăй суйласа илнĕ академине кĕме ирĕк пама ыйтса командăра рапорт парать, унта вăл хăй мĕнле ĕçре ĕçленине, çар званине, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнче службăра пулни çинчен кĕске сведенисем, миçе çултине, пĕтĕмĕшлĕ пĕлÿсемпе çар пĕлÿвĕсем мĕнлине тата адресне кăтартса парать (рапорт ÿкерчĕкне академи начальникĕ патне йарать).

Рапортпа пĕрле тĕплĕн çырнă автобиографи тата парти йе комсомол организацийĕ панă характеристика йарать.

Академине йышăнма ыйтса рапорт панă кашни кандидата малтанлăха тăвакан çырулă испытанипе тăма ирĕк парас ыйтува татса панă çĕрте округри çар совечĕ обйазательнă тата йулашки инстанци пулса тăрать.

Академисем çумĕнче вĕренме кĕмелли конкурсла екзамĕне тăратассипе Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн аслă çар-вĕренÿ заведенийĕсен Управленийĕ тăвать. Çав екзаменсене хатĕрленме кандидатсене 45 кунлă отпуск параççĕ.

РАБОЧИСЕМПЕ ХРЕСЧЕНСЕН ХĔРЛĔ ÇАРĔН АСЛĂ ÇАР-ВĔРЕНÿ ЗАВЕДЕНИЙĔСЕН УПРАВЛЕНИЙĔ.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Шупашкар хуличчи финанс пайĕ

Шупашкарти предприйатисен, организацисен тата учрежденисен руководителĕсемпе бухгалтерсене 1937 çулта стольарсене, мальарсене, слесăрсене т. ыт. те хăйсен материалĕсемпе ĕçлесе панăшăн мĕн чухлĕ тÿлени çинчен хулари финанс пайне 1938 çулти йанварĕн 10-мĕшĕнчен кайа йулмасăр спискă тăратма кирлине астутарать.

Çак формăпа пĕлтермеле: хушамачĕ, тÿрĕс адресĕ, миçе уйăхшăн мĕн чухлĕ тÿлени.

Кунсăр пуçне çĕр ренти тăрăх тата çуртйĕршĕн тÿлекен налог тăрăх иртнĕ çулхи формăпа тата иртнĕ çулхи ставкăсемпех 1938 çулшăн расчет тăратмала.

Çÿлте кăтартнă спискăсемпе тата расчотсене тăратман организацисен руководителĕсемпе бухгалтерĕсем ответ тытаççĕ.

Хулари финанс пайĕ

Академи театрĕнче

Йанварĕн 9-мĕшĕнче

вырăсла спектакль—Водевильсен вечерĕ

А. П. ЧЕХОВ.

„МЕДВЕДЬ", „ЮБИЛЕЙ", „ПРЕДЛОЖЕНИЕ"

Б. И. Праудинпа В. И. Тинский лартаççĕ.

Талон № 77. Абонемент № 4. Талон № 10.

Чăвашпромкассăн Кувшинкăри 12 лет ЧАССР йачĕпе тăракан канмали çурчĕ

Пурне те пĕлсе тăма çакна пĕлтерет. Канмали çурт 1938 çулта канма путевкăсене укçала сахал сутать. Çавăнпа та, 1938 çулшăн путевкăсем илес текен организацисен халех чăвашпромкассăпа килĕштерÿсем тумала.

ЧĂВАШПРОМКАССĂ

Адрес: Шупашкар, Калинин урамĕ, 49.

Пур учителсене тата Пуçламĕшпе вăтам шкулта ĕçлекенсен професси сойузĕн членĕсене

Чăваш Республикĕнчи Комитет хăйĕн сойузĕнче тăракан пур членĕсене те çакна пĕлтерет: 1938 çулта канмали çуртсене, курортсене, санаторисене тата инçетри екскурçисене каймали путевкăсене укçала илес хатĕрлеме зайавкăсене халех памала.

Путевкăсем илес пирки зайавкăсене Сойузăн районсенчи комитечĕсене февралĕн 1-мĕшĕччен тăратмала. Путевкăсене мĕнле майпа, мĕн хак тÿлесе илмелине районсенчи комитетсем ăнлантарса параççĕ, йе Республикăри Комитетран çыру йарса пĕлме пулать.

Чăвашсен Трахом Институчĕ

Кăçалхи йанварĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа чирлисене, канмали кунсемсĕр пуçне, кашни кунах ирхине 9 сехетрен 14 сехетчен йышăнать.

Чирле пынисене амбулаторинче ирхине 8 сехетрен пуçласа 13 сехетчен çыраççĕ.

Адрес: Канашскайа урамĕ, Чăвашсен Трахом Институчĕн çурчĕ.

Чăвашсен Трахом Институтне

йалан ĕçлеме мидицинă ĕçне пĕлекен сестрасем кирлĕ.

Дирекци.

Чăваш АССР Çыхăну Управленине йалан ĕçлеме кирлĕ:

1. Йурист-консульт
2. Аслă бухгалтер
3. Бухгалтер 2 çын
4. Контрольор укçа куçарас йенĕпе ĕçлеме 2 çын
5. Економист-статистик
6. Машинистка (квалификацилĕ)
7. Економист
8. Уборщица 1 çын
9. Курйер 1 çын.

Ĕçукçи государство нормированийĕ тăрăх.

Çак адреспе ыйтмала: Чăваш АССР Çыхăну Управленийĕ. Иккĕмĕш хутлăх, 24 № пÿлĕм. Телефон №—0—41. Кедрăвн уйрăмĕ.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 5 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 16. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2. Тираж 1370. 53—52 см. 1—1 п. л.